24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1941 ИЮНЬ 18 ЮНКУН 141 (5856) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

Тырпулсене пухса кĕме кăтартуллăн хатĕрленер

Парти Обкомĕн VII-мĕш Пленумĕ çак кунсенче кăçалхи çураки итогĕсене турĕ, тырпула пухса кĕме тата государствăна тырпул тăратма хатĕрленес задачăсене палăртса хăварчĕ.

Республикăри колхозсем çуракине ăнăçлăн вĕçлерĕç. Социализмлă ялхуçалăх кăçал çуракинче тепĕр пысăк çĕнтерӳ турĕ. Тырă акма тухиччен те, ака вăхăтĕнче те çанталăк чылайччен начар тăчĕ пулсан та, колхозсем çуракине кĕске срокра тата пысăк пахалăхпа иртерчĕç. Акара агротехникăна лайăх пурнăçласа пырассишĕн нумай колхозсем ăнăçлăн кĕрешрĕç. Алăпа акса хăварнă хисеп кăçал, иртнĕ çулхипе танлаштарсан, чылай чакнă. Сталин ячĕпе тăракан Ленин орденлĕ колхоз (Вăрнар р.) кăçал çуртрисене хĕреслĕ майпа акса хăварчĕ. Ун пек колхозсем татах та пур. Чылай çĕр лаптăкĕ çинче хĕресле меслетпе, вăрлăха пĕтĕмпех яровизацилесе, формалин шывĕпе çуса тата пĕтĕмпех ретлĕ сеялкăпа акса хăварнă колхозсем вуншарăн кăна мар шутланаççĕ.

Колхозсен уйхирĕсенче калчасем лайăх çитĕнеççĕ: ыраш та, çуртри те пĕр тикĕс ӳсет. Ку вăл колхозниксен çуракинчи пархатарлă ĕçĕн результатчĕ. Колхозниксем вăйлă тырпулшăн кĕрешеççĕ, колхозсенче, бригадăсемпе авеносенче социализмлă ăмăрту сарăлса пырать. Пĕр тикĕс те, каррăн çитĕнекен тырпула лайăх пăхса ӳстересси — пĕтĕм колхозниксемпе колхозницăсен хисеплĕ задачи.

Çанталăк нӳрĕ пулнă май, тырпулсемпе пĕрлех çумкурăксем те йышлăн хунаççĕ. Аçта çумкурăк — унта ялхуçалăхне сиенлекен хурт-кăпшанкăсем. Малта пыракан колхозсем, çакна шута илсе, çумкурăксене пĕтерес ĕçе хастарлăн тытăнчĕç, çум çумлама йышлăн тухрĕç. Çакăн пек ĕçлемелле пур колхозсенче те.

Тырпула тирпейлĕ, лайăх пăхса çитĕнтернĕ май, ăна пухса кĕме те халех, пур енчен те тĕплĕн хатĕрленни кирлĕ. Уборка — ялхуçалăх ĕçĕсен пĕтĕм ăнăçлăхне татса паракан тапхăр. Колхозниксен, трактористсен, комбайнерсен, агрономсен ĕçне уйран пухса кĕнĕ тырпул хисепĕ тăрăх хаклаççĕ. Кам нумайтарах тырпул туса илнĕ — вăл чăннипех те пархатарлă ĕçленĕ, стахановла агротехникăна пурнăçа кĕртсе пынă.

Кăçалхи çураки колхозсен уйхирĕсенчи стахановла ĕç анлăн сарăлнипе уйрăмăнах палăрса пулса тăрать. Стахановецсен йышĕ хăвăрт ӳссе пычĕ. Ку вăл пирĕн колхозсенче, колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлемелле тунă май, ĕç тухăçлăхĕ хăвăрт ӳссе пынине кăтартса парать. Ĕç тухăçлăхне ялхуçалăхĕн ытти ĕçĕсенче те — çум çумлană çĕрте те, уборкăна хатĕрленес тата ирттерес ĕçре те хăвалăн ӳстерсе пымалла. Тырпула хăвăрт пухса кĕртессине ĕç вăйне тĕрĕс йĕркелесе тухни, ĕç тухăçлăхне ӳстерни татса парать. Кам, ăçта, мĕнле ĕç тумаллине тата ĕç хăвăртлăхне мĕнле майсемпе ӳстерсе пымаллине колхозницăсен хисеплĕ задачи.

Çанталăк нӳрĕ пулнă май, тырпулсемпе пĕрлех çумкурăксем те йышлăн хунаççĕ. Аçта çумкурăк — унта ялхуçалăхне сиенлекен хурт-кăпшанкăсем. Малта пыракан колхозсем, çакна шута илсе, çумкурăксене пĕтерес ĕçе хастарлăн тытăнчĕç, çум çумлама йышлăн тухрĕç. Çакăн пек ĕçлемелле пур колхозсенче те.

Тырпула тирпейлĕ, лайăх пăхса çитĕнтернĕ май, ăна пухса кĕме те халех, пур енчен те тĕплĕн хатĕрленни кирлĕ. Уборка — ялхуçалăх ĕçĕсен пĕтĕм ăнăçлăхне татса паракан тапхăр. Колхозниксен, трактористсен, комбайнерсен, агрономсен ĕçне уйран пухса кĕнĕ тырпул хисепĕ тăрăх хаклаççĕ. Кам нумайтарах тырпул туса илнĕ — вăл чăннипех те пархатарлă ĕçленĕ, стахановла агротехникăна пурнăçа кĕртсе пынă.

Кăçалхи çураки колхозсен уйхирĕсенчи стахановла ĕç анлăн сарăлнипе уйрăмăнах палăрса пулса тăрать. Стахановецсен йышĕ хăвăрт ӳссе пычĕ. Ку вăл пирĕн колхозсенче, колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлемелле тунă май, ĕç тухăçлăхĕ хăвăрт ӳссе пынине кăтартса парать. Ĕç тухăçлăхне ялхуçалăхĕн ытти ĕçĕсенче те — çум çумлană çĕрте те, уборкăна хатĕрленес тата ирттерес ĕçре те хăвалăн ӳстерсе пымалла. Тырпула хăвăрт пухса кĕртессине ĕç вăйне тĕрĕс йĕркелесе тухни, ĕç тухăçлăхне ӳстерни татса парать. Кам, ăçта, мĕнле ĕç тумаллине тата ĕç хăвăртлăхне мĕнле майсемпе ӳстерсе пымаллине колхозсен уйхирĕсенче калчасем лайăх çитĕнеççĕ: ыраш та, çуртри те пĕр тикĕс ӳсет. Ку вăл колхозниксен çуракинчи пархатарлă ĕçĕн результатчĕ. Колхозниксем вăйлă тырпулшăн кĕрешеççĕ, колхозсенче, бригадăсемпе авеносенче социализмлă ăмăрту сарăлса пырать. Пĕр тикĕс те, каррăн çитĕнекен тырпула лайăх пăхса ӳстересси — пĕтĕм колхозниксемпе

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Агитаци ĕçĕнче сезонлăх пулмалла мар

Колхозлă ялта агитаторсен ролĕ пиллех те пысăк. Агитаторсем хуçалăхлă тата политикăллă мероприятисене ирттернĕ çĕрте активлăн пулăшаççĕ. Çавăнпа пирĕн агитколлективсен тата агитаторсен ĕçри сезонлăха пĕтерес пулать, политикăллă агитаци ĕçне куллен туса пымалла.

Агитаци ĕçне ăнăçлăн, çавăн пекех йĕркеллĕ туса пырасси агитаторсене пĕлсе суйласа илниччен килет. Чылай агитколлективсенче агитаторсем пулса ĕçлеме интеллигенцинчен кăна суйласа илеççĕ, ялхуçалăхĕнче малта пыракансене, пĕлӳлĕх енĕпе чылай малта тăракан колхозниксемпе колхозницăсене явăштармаççĕ. Çакă вăл пысăк ситменлĕх пулса тăрать.

Икекри пуçламĕш парторганизацин агитколлективĕнче малтанхи вăхăтра 28 агитатор пулнă. Вĕсем пурте тенĕ пекех ялти учительсем, врачсем шутланнă. ВКП(б) Ишлей райкомĕ çак агитколлективăн ĕçĕсене пăхса тухнă хыççăн, агитаторсем пулса ĕçлеме малта пыракан колхозниксене суйласа илнĕ. Хальхи вăхăтра 35 агитатор, вĕсене парторганизацин пухăвĕнче пăхса тухса çирĕплетнĕ. Колхозниксенчен уйăрнă агитаторсем лайăх ĕçлеççĕ, вырăнти примерсемпе ытларах усă кураççĕ.

Колхозниксене ĕçлĕн хушса тӳлесси çинчен партипе правительство йышăннă постановлении агитаторсем кулленех ăнлантарса параççĕ. Çавна пула вара колхозниксемпе колхозницăсен производствăллă активлăхĕ ӳссех пырать.

Агитколлективсем большевикла агитацине тырпул тухăçлăхне, выльăхчĕрлĕх продуктивлăхне ӳстерес тата хуçалăхлă ыйтусемпе сыхăнтарса пынă çĕрте ĕçсем уйрăмах лайăх пулса пыраççĕ. Сăмахран, «Восток» колхозри агитколлективăн ĕçĕсене илсе пăхар. Кунта агитаторсене уйрăм участоксем çумне çирĕплетсе тухнă. Агитколлектив руководителĕ И. Павлов юлташ кашни агитатор бригадăра тата звенора мĕнле ĕçленине тĕрĕслет, вăхăтра кирлĕ пулăшу парать. Агитаторсем агитаци ĕçне туса пынисĕр пуçне бригадăсемпе звеносенчи ĕçсене тĕрĕс йĕркелеме пулăшаççĕ. Малтанхи вăхăтра кунта бригадăсенче звеносем пулман. Çавна пула звеносенчи ĕçсем те йĕркеллĕ пулса пыман, колхоз кая юлнă. Агитаторсем пуçарнипе звеносем организацилеНĕ. Бригадăсенче, звеносенче халь ĕç дисциплини чылаях çирĕпленчĕ. Халĕ кашни звено хăйне çирĕплетсе пана участок çинче пысăк тухăçлă тырпул туса илессишĕн, фермăра ĕçлекенсем выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхне ӳстерессишĕн кĕрешеççĕ. Кăçалхи сураки не, ирттĕ çултипе танлаштарсан, пысăк пахалăхпа вĕçленĕ.

Политикăлла-массăллă ĕçе ăнăçлăн туса пырасси агитколлектив руководителĕсен семинарĕсене час-часах ирттернинчен те нумай килет. Çакна шута илсе, ВКП(б) Ишлей райкомĕ кашни уйăрах агитаторсен семинарĕсене туса ирттерет, çав семинарсенче агитаторсен çитес кунсенче мĕнле ыйтусем тăрăх каласусем ирттермелли çинчен сӳтсе-явăççĕ, лайăх ĕçлекен агитколлективсен паха опычĕсемпе паллашаççĕ. Çакăн хыççăн агитколлектив руководителĕсем выраНсенче хăйсен агитаторĕсемпе семинар ирттереççĕ. Çакăн пек туни большевикла агитаци ĕçне пĕр чарăнмасăр туса пыма, агитаци ĕçĕн пахалăхне ӳстерме пулăшать.

Хальхи вăхăтра агитаци ĕçне уйăрте сумкăраксене çумлас, утă çулма тата тырпулсене уйран пуçтарса кĕртме хатĕрленес ĕçсемпе çыхăнтарса пымалла.

И. ВИНОКУРОВ.
ВКП(б) Ишлей райкомĕн пропагандăпа агитаци отделĕн заведующин заместителĕ.

Коммунистсен сĕнĕвĕсене пурнăçа кĕртеççĕ

ВĂРНАР. Пуçламĕш парторганизацисен секретарĕсене ĕçре пулăшасси, отчетпа суйлав пухăвĕсенче йышăннă решенисене тата коммунистсен сĕнĕвĕсене пурнăçа кĕртнине тĕрĕслесе тăрасси ВКП(б) райкомĕн ĕçĕнче пысăк вырăнта тăмалла.

Пуçламĕш парторганизацисем отчетпа суйлав пухăвĕсен решенийĕсене пурнăçа мĕнле кĕртсе пынине тĕрĕслĕнĕ хыççăн Вăрнар районĕнчи чылай пуçламĕш организацисен ĕçĕ лайăхланнине палăрать. Йĕршупуçĕнчи, Пăртасри, Волонтерти, Кĕçĕн Явăшри пуçламĕш парторганизацисем отчетпа суйлав пухăвĕсен решенийĕсене тата коммунистсен сĕнĕвĕсене пурнăçа кĕртсе, хăйсен ĕçĕсене урăхлатса çĕнетреç. Çак пуçламĕш парторганизацисем отчетпа суйлав пухăвĕсен решенийĕсене тата коммунистсен сĕнĕвĕсене тĕплĕн шута илсе ĕç планĕсем туса, вĕсене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе конкретлă ĕçсем тăваççĕ.

Янгорчинăри территориллĕ пуçламĕш парторганизацин отчетпа суйлав пухăвĕнче парторганизаци колхозсене тата ялти культпросвет учрежденийĕсене çителĕксĕр ертсе пынине палăртнăччĕ. Пуçламĕш парторганизаци отчетпа суйлав пухăвĕсенче пăхса тухнă хыççăн, агитаторсем пулса ĕçлеме малта пыракан колхозниксене суйласа илнĕ. Хальхи вăхăтра 35 агитатор, вĕсене парторганизацин пухăвĕнче пăхса тухса çирĕплетнĕ. Колхозниксенчен уйăрнă агитаторсем лайăх ĕçлеççĕ, выраНти примерсемпе ытларах усă кураççĕ.

Колхозниксене ĕçлĕн хушса тӳлесси çинчен партипе правительство йышăннă постановлении агитаторсем кулленех ăнлантарса параççĕ. Çавна пула вара колхозниксемпе колхозницăсен производствăллă активлăхĕ ӳссех пырать.

Агитколлективсем большевикла агитацине тырпул тухăçлăхне, выльăхчĕрлĕх продуктивлăхне ӳстерес тата хуçалăхлă ыйтусемпе сыхăнтарса пынă çĕрте ĕçсем уйрăмах лайăх пулса пыраççĕ. Сăмахран, «Восток» колхозри агитколлективăн ĕçĕсене илсе пăхар. Кунта агитаторсене уйрăм участоксем çумне çирĕплетсе тухнă. Агитколлектив руководителĕ И. Павлов юлташ кашни агитатор бригадăра тата звенора мĕнле ĕçленине тĕрĕслет, вăхăтра кирлĕ пулăшу парать. Агитаторсем агитаци ĕçне туса пынисĕр пуçне бригадăсемпе звеносенчи ĕçсене тĕрĕс йĕркеллĕ туса пыман, колхоз кая юлнă. Агитаторсем пуçарнипе звеносем организацилеНĕ. Бригадăсенче, звеносенче халь ĕç дисциплини чылаях çирĕпленчĕ. Халĕ кашни звено хăйне çирĕплетсе пана участок çинче пысăк тухăçлă тырпул туса илессишĕн, фермăра ĕçлекенсем выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхне ӳстерессишĕн кĕрешеççĕ. Кăçалхи сураки не, ирттĕ çултипе танлаштарсан, пысăк пахалăхпа вĕçленĕ.

Политикăлла-массăллă ĕçе ăнăçлăн туса пырасси агитколлектив руководителĕсен семинарĕсене час-часах ирттернинчен те нумай килет. Çакна шута илсе, ВКП(б) Ишлей райкомĕ кашни уйăрах агитаторсен семинарĕсене туса ирттерет, çав семинарсенче агитаторсен çитес кунсенче мĕнле ыйтусем тăрăх каласусем ирттермелли çинчен сӳтсе-явăççĕ, лайăх ĕçлекен агитколлективсен паха опычĕсемпе паллашаççĕ. Çакăн хыççăн агитколлектив руководителĕсем выраНсенче хăйсен агитаторĕсемпе семинар ирттереççĕ. Çакăн пек туни большевикла агитаци ĕçне пĕр чарăнмасăр туса пыма, агитаци ĕçĕн пахалăхне ӳстерме пулăшать.

Хальхи вăхăтра агитаци ĕçне уйăрте сумкăраксене çумлас, утă çулма тата тырпулсене уйран пуçтарса кĕртме хатĕрленес ĕçсемпе çыхăнтарса пымалла.

И. ВИНОКУРОВ.
ВКП(б) Ишлей райкомĕн пропагандăпа агитаци отделĕн заведующин заместителĕ.

Пĕччен коммунистсен ĕçĕсем

КУВАКИНО. Рындино ялĕнче пĕччен коммунистсем тăваттă, вĕсем пурте ертсе пырас ĕçсенче ĕçлеççĕ. Д. Жоров коммунист колхоз председателĕ, Ахаев юлташ ялсовет исполкомĕн председателĕ, парти членĕн кандидачĕ Серякин юлташ пуçламĕш шкул заведующийĕ.

Коммунистсем хăйсене шанса панă ĕçе тӳрре кăларма тăрăшаççĕ. Жоров юлташ тăрăшса ĕçленине пула Калинин ячĕпе тăракан колхоз, малтан кая юлса пынăскер, районра малта пыракан колхозсенчен пĕри шутланать. Колхозра халь пилĕк ферма организациленĕ, çĕнĕрен витесем, элеватор, икĕ пĕве тунă.

Колхозри пĕччен коммунистсем колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче политикăлла-массăллă ĕçе йĕркеллĕ туса пыраççĕ. Колхозниксем ĕç çине тӳрĕ кăмăлпа пăхаççĕ, пур ĕçе те хăй вăхăтĕнче тăваççĕ. Кăçалхи çуракине кĕске срокра, агротехника енчен пысăк пахалăхпа ирттернĕ.

Колхозниксемпе колхозницăсем коммунистсене хисеплеççĕ. Мĕншĕн тесен вĕсем кулленхи ĕçре коммунистсем лайăх пулăшса пынине аван кураççĕ.

Ялсовет исполкомĕн председателĕн ĕçĕсене Ахаев юлташ лайăх туса пырать. Ку ялсовечĕ укçа-тенкĕ пухмалли плана кварталтан квартала тулларса пынă. Çĕнĕ заема ăнăçлăн вырнаçтарнă, заемшăн укçа пухассине те аван организациленĕ.

П. БОЧКОВ.

Начар ĕçлекен организацисем

СОВЕТСКОЕ. Сталин ячĕпе тăракан колхозри комсомол пуçламĕш организацийĕ хăйĕн ĕçне йĕркеллĕ туса пымасть.

Колхоз хуçалăхлă-политикăллă ĕçсене пурнăçлас тĕлĕшпе кая юлса пырать. Комсомолецсем ĕç дисциплинине пăсакансене хирĕç çителĕксĕр кĕреШеççĕ, хăйсем те колхоз производствинче сахал хутшăнса ĕçлеççĕ.

Комсомол пуçламĕш организацийĕ плансăр ĕçлет. Çак иртнĕ 3—4 уйăх хушшинче комсомолецсен пухăвĕ пĕрре те пулман. Комсомол комитечĕн секретарĕ С. Ядарейкин юлташ комсомол хуçалăхне колхоз правленийĕн шкафĕнче, уçă сĕртех усрать. Комсомолецсем дисциплинăсăр пулнине çакă та лайăх кăтартса парать. Ядарейкин хăйĕн комсомол билетне çухатнă. Комсомолецсем панă член укçине январь уйăхĕнчен пуçласа паянхи куна çитсе те перекет кассине кайса хывман. Комсомол пуçламĕш организацийĕн çитменлĕхĕсем çинчен ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Кузьмин юлташ лайăх пĕлсе тăрать пулин те, ĕçе йĕркелесе ярас тесе вырăна тухса пулăшмасть.

Якаткасси ялсоветĕнчи «Волна революции» колхозри комсомол пуçламĕш организацийĕ те кăçал питĕ начар ĕçлет, кунта комсомолецсен пухăвĕ пачах пулман, член укçи те пухман.

Якаткассинчи туллимар вăтам шкулти комсомол пуçламĕш организацинче те çитменлĕхсем нумай. Комитет секретарĕ Петровская кăçал комсомолецсемпе нимĕнле каласу та ирттермен, член укçине кăçалхи çулпăн пĕр пус та пуçтарман.

ВЛКСМ райкомĕн комсомол пуçламĕш организацийĕсене тивĕçлĕ пулăшу памалла.

Н. МИХЕЕВ,
Н. ПУШКИН.

Белоруссире шурлăхсене типĕтеççĕ

Белоруссири колхозниксем план тăрăх 100 пин гектар шурлăха типĕтес вырăнне 130 пин гектар типĕтме сăмах панă, вĕсем хăйсен обязательствисене чыслăн пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Хальхи вăхăт тĕлне 60 пин гектара яхăн типĕтнĕ.

Мелиораци ĕçĕсене 3.444 колхоз, 125 пин колхозник хутшăннă. Малта Полесье облаçĕ пырать — çак кунсенче çулталăк планне тултарнă.

Партипе правительство сывăхри 15 çул хушшинче Белоруссири 4 миллион гектар шурлăха типĕтсе тырă акма юрăхлă тăвас тĕлĕшпе партин задачăна татса парас ĕçе Совет Союзĕнчи нумай научнăй учрежденисем, Мускавпа Ленинградри пысăк ученăйсем хутшăннă.

Ĕçшĕн хушса тӳлемелле туни колхозниксене татах та тухăçлăрах ĕçлеме хавхалантарать

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «Ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне тата выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхне ӳстернĕшĕн Чăваш АСС Республикинчи колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлесси çинчен» йышăннă постановлени колхозниксемпе колхозницăсен производствăллă хастарлăхне ӳстерсе пырать.

Колхозниксем, партипе правительство колхозсемшĕн тăрăшнине ответлесе, уйхирсенче, фермăсенче, садсенче тимлĕн ĕçлеççĕ, колхоз пуянлăхне вăйлатассишĕн кĕрешеççĕ. Паян эпир Вăрнар районĕнчи, Рунгăри «Малый Цивиль» колхозра вăл постановлението мĕнле пурнăçланса пыни çинчен колхозниксен çырăвĕсене пичетлетпĕр.

Колхоз хуçалăхĕ чечекленет

Рунгăри ĕçхресченĕсем ĕлĕк хăйсен çĕрĕсем çинче нихçан та пĕр десятинран 30—40 пăтран ытла тырă туса илеймен. Колхозлă хуçалăхра çеç эпир лайăх тырă туса илме пуçларăмăр. 1940 çулта эпир кашни гектартан 15 центнер тырă туса илтĕмĕр. Анчах çакăн чухлĕ тырă туса илнипе эпир лăпланса ларма пултараймастпăр. Пирĕн çĕр çинче татах та вăйлă тырпул туса илме пулать. Кăçал эпир кашни гектартанах 100 пăт тырă илес задача лартрăмăр. Çав задачăна ăнăçлăн пурнăçлас тесе эпир кашни бригадăра, звенора социализмлă ăмăртăва анлăн сарса ятăмăр.

Çуракине хĕрсех хатĕрленнĕ вăхăтра СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «Ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне тата выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхне ӳстернĕшĕн Чăваш АСС Республикинчи колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлесси çинчен» йышăннă постановлени тухрĕ. Çак постановлението пирĕн колхозра пур колхозниксем те, колхозницăсем те пысăк хавхалăхпа кĕтсе илчĕç. Ĕçсынни депутачĕсен районри Совечĕн исполкомĕпе ВКП(б) райкомĕ панă план тăрăх пирĕн колхоз кашни гектартанах 19 центнер тĕттырă туса илмелле. Çак план тăрăх эпир кашни бригадăна тата звенона тырпул туса илме пур культурăсем тăрăх та план патăмăр.

Кăçалхи çуракине, çанталăк начар тăчĕ пулсан та, эпир 7 кун хушшинче тата пысăк пахалăхпа вĕçлерĕмĕр. Эпир кăçал малтанхи хут тырăсене лайăх сортласа акрăмăр, вăрлăха çурринне яхăн яровизацилерĕмĕр, уяр çанталăкăн кашни минутĕнче туллин усă курса ĕçлерĕмĕр. Кăçалхи çуракинче колхозниксем ĕç нормисене куНтан кун тултарса пычĕç. Сеяльщиксем кашни кунах 8—9 гектар акрĕç. Çуракинче колхозницăсем те аван ĕçлерĕç. Ĕç пахалăхне эпир хытă тĕрĕслесе пытăмăр. Аçта та пулин, хăш участокра та пулин, начар сухаласан, начар сӳрелесен, ун çинчен пĕтĕм колхозăпех калаçаççĕ, ака-суха ĕçĕнче брак тăвакансем çинчен стена хаçачĕсем çинче тăтăшах сырса пытăмăр.

Ĕç пахалăхне колхозра халĕ правлени председателĕпе бригадирсем çеç мар, колхозниксем хăйсем те тĕрĕслеççĕ. Çакă ĕнтĕ колхозниксен политикăлла активлăхĕ ӳснине кăтартса парать.

Кĕрхи тырăсене эпир 72 гектар çинче апат патăмăр. Уя пĕтĕмпе 522 центнер минерал удобренисем тăкнă. Колхоз уйăсенче халь вăйлă тырпул ешĕрсе çитĕнет. Çуртыррисене апат пама 200 центнер минерал удобренисем кӳрсе килетпĕр.

Çак кунсенчех клевер çинче сумçумлама пуçлатпăр. Уйра тракторсем çĕртме тăваççĕ. Çĕртме туса пĕтернĕпе пĕрех. Колхозниксем тислĕк, торф тăкаççĕ.

Вăйлă тырпул туса илес ĕçре пирĕн татах та лайăхрах ĕçлемелле-ха. Ку таринччене эпир тислĕкпе, торфпа питĕ сахал усă курнă. Кăçал çĕртме уйăнах 6000 лав тислĕк, 12.000 лав торф тăкатпăр.

Иртнĕ çулта эпир выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе лайăхлатас тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлеме пуçларăмăр. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес плана 1940 çулта пĕтĕмпех тултартăмăр. Анчах пирĕн выльăхсем валли лайăх витесем пулман. Эпир вара ятарласах строительство тĕлĕшпе ĕçлекен бригада организацилерĕмĕр. Ку бригада кĕске срокрах сысна, сурăх, чăх-чĕп витисене, выльăх пăхакансен общежитине турĕ, ĕне, лаша витисене юсарĕ.

Колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлесси çинчен постановлени тухнă хыççăн выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç лайăхланса пырать. 1941 çулта выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана эпир сроксенчех тултартăмăр. 1942 çулти январĕн 1-мĕш тĕлне пирĕн колхозра 65 ĕне, 95 сысна, 74 сурăх, 250 чăх, 20 хур пулмалла. Паянхи куна пирĕн фермăсенче 72 ĕне, 164 сысна, 99 сурăх, 600 чăх, 75 хур шур.

Кăçал эпир выльăхсенчен продукци илес плана та ытлашшипех тултаратпăр. Государство умĕнчи обязательствесене те срокченех тултарса пыратпăр. Государствăна колхозăн 6.202 литр сĕт памалла, июнĕн 1-мĕшне 4.200 литр панă. Июнь уйăхĕнче сĕт парас плана пĕтĕмпех тултаратпăр. Аш-кажай 24,67 центнер памалла, халĕ 13 центнер панă. Çăм 56 килограмм вырăнне 33 килограмм панă. Çăмарта парас плана та пĕтĕмĕшпех тултарнă.

СССР Совнаркомĕ колхозсенчи выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç валли выльăх апатне ӳстермелли мерăсем çинчен йышăннă постановлени пире выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе татах лайăхлатма, ăна сарса ямa май парать. Эпир иртнĕ çулта выльăхсем валли шултра апатсем, тырă сахал мар хăвартăмăр, анчах сĕткенлĕ апатсем сахал пулчĕç. Кăçал эпир выльăх кăшманĕсене, силос курăкĕсене лайăх пăхатпăр, силос валли уйри, улăхри, вăрманти курăксемпе те усă куратпăр. Кăçал силос башни тăваттăнпа.

Колхоз хуçалăхĕ сарăлсах пырать. Пирĕн çĕнĕ клуб, колхоз правлени, кĕлетсем пур. Кăçал эпир хамăр ялта 30 радиоточка кĕртес. теплĕр. Колхоз клубĕнче политикăлла-массăллă ĕçе чылаях лайăхлатрăмăр.

П. ФИЛИМОНОВ.
«Малый Цивиль» колхоз председателĕ.

Михайлов юлташăн паха опычĕ

ÇЕМЕРЛЕ. Машинно-тракторнăй станцин комбайнерĕ Михайлов юлташ комбайнпа вырнă чух ыраш улăмне лучĕркесе пĕтересрен сыхламалли меслет шухăшласа кăларнă. Вăл, хăйĕн комбайнне юсанă май, хедер айне урăх çĕçĕ лартать. Çапла туни комбайнăн ĕç тухăçлăхне ӳстерет тата ыраш улăмне лучĕркенсе пĕтме памасть.

Хедер айне урăх çĕçĕ лартсан комбайн ларакан ыраша тăрринчен 30 сантиметр тăршшĕ татса илет те пучахинне çапса кăларать. Унтан ыраш тĕпĕнчен вырса илсе ним ватмасăр урăх çĕре хурса пырать. Çапла вара ыраш улăмĕ выльăхсене çиме юрăхлă пулса юлать.

Г. П.

Сĕт-çу продукчĕсем

Маслопромăн Канашри бази тата сĕт-çу завочĕ ĕççыннисем валли тĕрлĕ продуктсем туса кăларать. Сĕт-çу завочĕ ку таринччен кефир 390 килограмм, сырковăй масса 2.527 килограмм тата темиçе çĕршер килограмм мороженăй, вĕретнĕ сыр, хăйма туса кăларнă.

Çĕнĕ закон çинчен ăнлантаратпăр

Ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне тата выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхне ӳстернĕшĕн ĕçшĕн хушса тӳлесси çинчен йышăннă постановлението пирĕн колхозниксемпе колхозницăсен ĕçне тата ĕçкунĕсене çĕнĕллĕ çинчен тĕплĕн ăнлантарса пăтмăр. Колхоз счетовочĕ Куликов юлташ колхозниксен ĕçне тата ĕçкунĕсене çĕнĕллĕ учета илсе пырасси çинчен тăтăшах ăнлантарса парать. Кашни колхозник кашни уйăхрах миçе ĕçкунĕ, миçе кун ĕçленине кăтартакан список колхоз правленинчех сакăнса тăрать. Çакă вăл колхозниксене ĕçлеме хавхалантарать.

Çуракки вăхăтĕнче эпир агитацине массăллă ĕçе ӳе куçартăмăр. Кашни бригадăрах агитаторсем, политвулавçăсем ĕçлерĕç. Агитатор Андрей Краснов сӳрелес ĕçре ĕçлет. Ĕçе вăл яланах тĕплĕн тăвать. Колхозниксене те лайăх ĕçлеме хавхалантарать. 2-мĕш бригадири сухаç Данил Филиппов та агитатор пулса ĕçлет. Учительсем Павел Филиппов, Михаил Ермолаев та агитацине лайăх ĕçлеççĕ.

Эпир агитаци ĕçĕнче стена хаçачĕсемпе сарлакан усă куратпăр. Пирĕн колхозра «Стахановец» хаçат тухать, кунсăр пуçне бригадăсенче те хаçатсем пур. Стена хаçачĕсене лайăх, хитрелетсе кăларатпăр. Стена хаçачĕсем ĕçшĕн хушса тӳлемелли çинчен колхозниксене ăнлантарса параççĕ. 4-мĕш бригадăра ăшăх сухалани çинчен «Стахановец» хаçатра çырнă пулнă. Кун çинчен вара бригадăра сӳтсе-явнă. Ун хыççăн вăл ситменлĕхе вăхăтрах тӳрлетнĕ.

П. АЛЕКСЕЕВ.

Избач, колхозри «Стахановец» стена хаçачĕн редакторĕ.

Чăхсем пысăк тупăш параççĕ

Иртнĕ çулта çеç эпĕ хам çемьепе колхоза кĕтĕм. Колхозра пире сийĕнчех ĕç пачĕç, эпир пĕр çул хушшинчех нумай тырă, пахча-çимĕçĕ ĕçлесе илтĕмĕр. Халĕ эпĕ, тăваттăмĕш уйăх ĕнтĕ, чăх-чĕп ферминче ĕçлетĕп.

Чăхсене эпир лайăх çитеретпĕр. Вĕсене кашни ирех сĕлĕ паратпăр, кăнтăрла пăтратса çитеретпĕр, каçхине тырăпа тăрантаратпăр. Сĕлĕсĕр пуçне чăхсене хуратăп та паратпăр. Хуратупа чăхсем питĕ юратса çиеççĕ, ăна çитерсен çăмарта та ытларах тăваççĕ. Пирĕн чăхсем хĕллех çăмарта тума пуçларĕç.

Эпĕ пĕтĕмпе 111 чăх пăхатăп. Кашни чăхранах 100 çăмарта илессишĕн çине тăрсах ĕçлетĕп. Колхоз правленийĕ çирĕплетнĕ план тăрăх кăçал пĕтĕмпе 8.330 çăмарта илмелле, халĕ эпир фермăра 5.225 çăмарта илнĕ. Государствăна çăмарта парас плана та пĕтĕмпех тултарнă. Эпĕ хамăн обязательствăна тултарсан 240 çăмарта илме пултаратăп.

Фермăра эпĕ нумай ĕçлесе илетĕп. Апрель уйăхĕнче эпĕ 36,7 ĕçкунĕ, май уйăхĕнче 45,3 ĕçкунĕ илнĕ.

Кăçал кĕркунне пирĕн 450 чăх ытла пулать. Чăх-чĕп ĕçĕ колхоза пысăк усă парать, çавăнпа та пирĕн колхозра чăх-чĕп ферминне лайăхлатассишĕн пур колхозниксем те тăрăшаççĕ.

А. НИКОНОРОВА.

Чăх-чĕп ферминче ĕçлекен колхозница.

Колхоз ферминче

Пирĕн колхозра халĕ пилĕк ферма. Колхозра 1941 çулта государствăн выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли планне ытлашшипех тултарнă. Кăçал эпир выльăхсенчен продукци илес ĕçре те пысăк ситĕнӳсемех турăмăр. 1940 çулта кашни ĕнерен 700 литр çеç сĕт суса илнĕ. Сыснасенчен, сурăхсенчен те продукци сахал илнĕ.

Хĕлле ĕнесене рацион тăрăх çитерпипе, кунне виçĕ хут шăварнипе тата сунипе сĕт ытларах суса илме пуçларăмăр. Колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлесси çинчен йышăннă постановлени фермăра ĕçлекенсене лайăхрах ĕçлеме хавхалантарать. Елĕкрех ĕне, сысна пăхакансем час-часах улшăнатчĕç; халĕ фермăра ĕçлекенсем нумайлăха ĕçлеме юлаççĕ, ĕçе зоотехника кăтартнă пек тума тăрăшаççĕ. Чăхсем, сывă ӳснипе, вĕсене лайăх пăхнипе, хĕллех çăмарта тума пуçларĕç.

Çĕнĕ закон пире ферма ĕçне тĕпренех лайăхлатма, пысăк продукци илме май панĕ. Доярка Дария Васильева фермăра икĕ çул ĕçлет. Вăл 12 ĕне пăхать. Унăн ĕнисем пурте пĕтĕ. Хĕлле ĕнесем пурте пăрулана. Пăрусем халь пурте лайăх ӳсеççĕ. Васильевăн хăй сумне çирĕплетсе пана ĕнесенчен кăçал пĕтĕмпе 17.000 литр сĕт суса илмелле. Июнĕн 1-мĕшне вăл 9000 литр суса илнĕ те ĕнтĕ. Çапла вара, вăл кашни ĕнерен вăтам шутпа 750 литр сĕт суса илнĕ. Иртнĕ çулта вăл çакăн чухлĕ сĕте çулталăкра çеç илме пултарнă. Унăн кăçал кашни ĕнерен 1400 литр сĕт суса илмелле. вăл 1500 литр сĕт суса илме обязательство илнĕ. Унăн ĕнисем кашни уйăхрах сĕт ӳстерсе пыраççĕ. Халĕ нумайĕшĕ кунне 12—14 литр параççĕ.

Эпир ĕнесене халĕ уя яратпăр, анчах вĕсене çапах апат ситеретпĕр. Дария Васильева пăхакан пăрусем талăкра 600 грамм хутшăнса пыраççĕ, çавăншăн ăна тата 15 литр сĕт хушса параççĕ. Çапла вара, Васильева 305 литр сĕт илме пултарать.

Доярка Наталия Краснова та лайăх ĕçлет. Вăл пăхакан ĕнесем пурте пăрулана, сĕт те ӳстерсех пыраççĕ. Пăрусем те лайăх ӳсеççĕ. План тăрăх кашни пăру талăкра 450 грамм таран хутшăнса пымалла пулсан, 4 уйăх хушшинче кунне 590 граммшар хутшăнса пынă.

Сурăхсене пăхакан Мария Купчикова та пысăк ситĕнӳсем тунă. Унăн кăçал план тăрăх пĕтĕмпе 81,60 килограмм çăм илмелле, халĕ 90 килограмм илнĕ те ĕнтĕ. Колхозра пĕтĕмпе 30 сурăх. Кашни сурăхран 3-шер килограмм çăм илнĕ. Вăл кăçал иккĕмĕш хут та 95 килограмм çăм илме пултарать. Çапла вара вăл кăçал пĕтĕмпе 185 килограмм çăм илет. Куншăн ăна 10 килограмм çăм параççĕ.

План тăрăх унăн пĕтĕмпе 31 путек илмелле пулсан, халĕ 45 путек илнĕ. Иккĕмĕш хут пăрамласан тата 20 путек илеççĕ. Çакăншăн вăл 8 тир е тир хакĕ чухлĕ укçа илет.

Фермăра пирĕн тумаллисем тата та нумай-ха. Час-часах эпир уйăрса панă апата та вăхăтра илейместпĕр, выльăхсене рацион тăрăх памалли апата параймастпăр. Улма пĕçермелли хатĕрсем туянман.

Д. ЕРМОЛАЕВ.
Выльăх-чĕрлĕх фермин заведующийĕ.

Хăçан пурте пулать?

Колхоз правленийĕн канцелярийĕ умĕнче сторожа тĕл пултăмăр.

— Правленире ĕçлекенсем пур-и?

Вăл пире илтмерĕ пулĕ-и, нимĕн те каламарĕ. Эпир канцелярине кĕтĕмĕр.

Алăк патĕнче кăмака çумĕнче, тăрăхла тенкел ларать. Уç çине пĕр çын тăсăлса выртнă. Картуспа хăй. «Кам ку?» Вăл эпир пулĕме кĕрсе тăрсан йăлт! сикрес тăчĕ. Палларăмăр.

Ку Хитекушкĕнчи «Новый путь» колхоз счетовочĕ Иван Герасимов пулчĕ. Унăн кăшт «пуç патне» пынă.

Ăшă, уяр çанталăк тăрать. Çакăн пек чухне уйхирте, колхоз пахчисенче, çулйĕр строительствинче хĕрӳллĕ ĕçсем пымалла. Кунта правленинче ĕçлекенсем хăйсем «хĕрсе» кайнă. Колхоз председателĕ Владимир Куликов «хĕрсе» сӳремелĕх 2—3 кунлăх отпуск илнĕ. Паян та унăн Хирлеç-пуçне шилĕке каймалла.

Колхозниксем ĕнер те тата паян та иртеннех хăйсен пахчисенче ĕçлеççĕ: пахча-çимĕçсем лартма йăран пуçаççĕ. Вĕсемшĕн пулсан колхозри ĕç «тухса тармасть». Колхозăн пахча-çимĕçсем лартмалли «çĕрĕ чĕрĕ, нӳрĕ, патне пырса кĕмелле мар». Çакăн пирки колхозра пахча-çимĕçсене лартмалли вырăнсене те хатĕрлемеççĕ.

Колхозăн 85 гектар ирхи çĕртме туМалла. Пĕтĕмпе халĕ 20 гектар кăна сухаланă, сухалама каллех «çĕр чĕрĕ». Кантăр та акса пĕтереймен-ха, каллех вĕсемшĕн «çĕр пĕтĕмпех пиçсе çитеймеННи» кансĕрлет.

Хитекушкĕнсене «çĕр пиçсе çитменни» шалтах тĕлĕнтерет, вĕсене ку «нӳрĕ çĕр» çулйĕр строительствинче ĕçлеме те кансĕрлет иккен. Çĕмĕрлепе Етĕрне çулĕ çинче 10—12 çын кăна ĕçлеççĕ

Çакăн пек кирлĕ тата çийĕнчех тумалли ĕçсене вăраха ярса пыни пĕртте çĕр нӳрринчен мар, колхоз правленинче ĕçлекенсен хăйсен «нӳрлĕхĕнчен» килеççĕ. Вĕсене «чĕркесем сывă пулсан» çитет. Акине те тунă вара ун чухне, йăранне те пуснă, пахча-çимĕçсене те лартнă, çĕртмине те туса пĕтернĕ, çулйĕрĕ те юсавлă. Акă хăçан ĕнтĕ вĕсен пурте пулать.

ЭЛĔК. **ИВ. МОСЕЕВ.**

Сĕт завочĕсем

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç аталанса тата ĕнесенчен сĕт суса илесси ӳссе пынă май, Мускав облаçĕнче сĕт илекен пунктсене сĕт пырса кĕресси чылай ӳснĕ. Кăçалхи пилĕк уйăх хушшинче заводсемпе приемочнăй пунктсем, 1940 çулти çак вăхăт хушшинчипе танлаштарсан, 17.680 тонна ытларах сĕт илнĕ.

Сĕт нумай пырса кĕнĕ май, Мускав облаçĕнче сĕт завочĕсем çĕнĕрен 26 завод тума тытăннă. Вĕсенчен чи пысăккисем Раменски, Дмитровски, Михневски тата Лопасненски районсенче пуласçĕ. Заводсене ăвĕрлĕ оборудованисемпе тăваççĕ, вĕсен хăйсен электростанцисем, паровой тата холодильнăй установкăсем пуласçĕ.

А. М. ГОРЬКИЙ ВИЛНЁРЕНПЕ 5 ҪУЛ ҪИТРЁ

Революцилле тăвăл йыхравҫи

Максим Горький 1900 çулсенче.

☆

Музей туяннă çĕнĕ материалсем

А. М. Горький музейĕ Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчи С. Т. Коненков скульптортан Горькин бронзăран тунă бюстне туяннă. Скульптор 1928 çулта Сорренттора пурăннă, Горький патĕнче пулнă вăхăтра унăн бюстне тунă.

Ютҫĕршывсенчен çавăн пекех тата писателĕн чех скульпторĕ В. Сапик бронзăран тунă бюстне тата вăлах Горький аллине ӳкерсе илнĕ гипса туяннă. В. Сапик 1913 çулта Капри çинче А. М. Горький патĕнче хăнара пулнă, çак ҫĕсене вăл çав вăхăтра тунă. А. М. Горький аллине ӳкерсе илнĕ гипс уйрăмах хаклă япала, мĕншĕн тесен В. Сапик—çак ҫĕре писатель виличчен тунă пĕртен-пĕр скульптор.

СССР Совнаркомĕ йышăннă постановлени тăрăх, скульптор В. И. Мухина—Сталинла преми лауреачĕ—ютҫĕршывсен Нью-Йоркри выставки валли бронзăран тунă А. М. Горький фигурине музея панă. Хальхи вăхăтра скульптурăна Третьяковски галлерейăра кăларса тăратнă.

Писатель Чулхулара пурăннă тапхăрпа сыхăнса тăракан мемориальнăй япаласем хушшинче çаксем пур: записной кĕнеке валли тунă рамка—ун çине «Е. А. Золотницкой от Горького» тенĕ сăмахсене касса сырса хунă, визит карточкисем валли тунă пĕчĕк тарелкăсем—вĕсем çине «Екатерине Алексеевне Золотницкой от Горьких» тенĕ сăмахсене касса сырса хунă.

Китайран писатель вилнĕренпе виҫĕ çул тултарнă ятпа ирттернĕ нумай пухусен фото-ӳкерчĕкĕсене илнĕ. Вĕсем çинче Китайри революцилле поэтсен доклачĕсемпе выступленийĕсене ӳкерсе илнĕ, Горький произведенийĕсене хăйсен тăван чĕлхипе вуланине кăтартса параҫҫĕ.

Горький ячĕпе

Тĕнчери литература институчĕ июнĕн 19—20-мĕшсенче Горький ячĕпе вечерсем ирттерет. Пирвайхи кун çакăн пек докладсем пулаҫҫĕ. Б. Бялик—«Ленин, Сталин, Горький», Е. Тагер—«А. М. Горький чĕлхи çинчен» тата Г. Чесноков—«Клим Самгин образĕн композицийĕ». Иккĕмĕш кун çакăн пек докладсем пулаҫҫĕ: Я. Эльсберг—«Горький новаторствине тата литературăри классикăлла традицисем», Н. Белкина—«А. М. Горькин пичетленсе тухман прози».

К. Федин тата А. Тихонов Алексей Максимович çинчен асаилӳсем каласа параҫҫĕ.

Çак докладсене А. М. Горький музейĕнче хăссенче вуласҫĕ. Музейре писателĕн сайра тĕл пулакан фотографийĕсен, унăн произведенийĕсем валли тунă картинăсен т. ытти-сен выставкине организацилеҫҫĕ. Уйрăм витринăсем çинче Горький алҫырăвĕсен фотокопийĕсем пулаҫҫĕ.

М. Горькин малтанхи повĕҫĕсемпе калавĕсем

М. Горькине хам чунтан юратать, çавă унăн манăҫа юлнă калавĕсен сборникне[1]) тата чи малтанхи пысăк повеҫне[2]) çĕнĕрен пичетлесе кăларнине хаваслăн кĕтсе илет. Çак произведенисене, вĕсем ĕлĕк провинцири хаçатсенче («Самарская газета», «Нижегородский листок», «Волгарь») тата тĕрлĕрен журналсемпе сборниксенче пĕр хут пичетленсе тухнă хыҫҫăн, ҫĕре тĕплĕн тума юратакан художник хăйĕн каярахпа çырнă сочиненийĕсен пуххине пĕрне те кĕртмен, çавăнпа та вĕсем пирĕн вăхăтри вулакансен сарлака массишĕн палла мар пулнă. Анчах Горькин çак малтанхи произведенийĕсем унăн литературăллă наследствинче пĕчĕкех мар выраи йышăнса тăнипе пĕрлех, халăха аслă писателĕн образне татах та туллин курса тăма пулăшаҫҫĕ, тесен те ытлашши пулас çук.

Çĕнĕрен пичетленсе тухнă произведенисенчен нумайĕшне М. Горький литература ĕçне хутшăннă хыҫҫăн малтанхи вунă çул хушшинче çырнă. Пуринчĕн те палла, çав çулсенче, В. И. Ленин калана тăрăх, пирĕн çĕршывра массăллă революцилле кĕрешӳн пролетариллĕ тапхăрĕ пуҫланса кайнă, кĕрешӳ пуҫĕнче революцилле социал-демократсем пулнă.

Çамрăк Горький буржуйсемпе помещиксен стройне хирĕҫ пысăк хурăнманлăхпа тулса литературăна пырса кĕнĕ, литература уншăн—çав строя хирĕҫ кĕрешмелли хĕçпăшал, литератор пултарулăхĕ—хăйĕн халăхĕшĕн обществăллă пысăк ĕҫ туни пулса тăнă.

Литература çине çакăн пек пăхни çинчен Горький каярахпа пĕр писатель-символист патне çырнă хăйĕн çырăвĕсенчен пĕринче çапла калана: «...шел, эсир литературăна трибуна çине тăшмана питлес тата тавăрас туйăмпа хăпарнă пек мар, цирка пырса кĕнĕ пек — фокуссемпе кĕретĕр...».

Çамрăк Горький хăйĕн литературăллă пултарулăхĕн пуçламĕшĕнчех этемшĕн, унăн ĕçлев правишĕн тата ирĕклĕхĕшĕн кĕрешнĕ. Унăн творчести тарăн шухăппа çутăлса тăрать, вăл мещанлĕхе, нĕрсĕр консерватизма хирĕҫ тата этемме чуралатакан унăн чысне таптакан пур условисене хирĕҫ хаярăн протеслет, кĕрешĕве тухма чĕнет. Ахальтен мар, Горькин творчести революцилле пысăк вырăн йышăнса тăнине илемлĕ сăмахсен палла мастерĕ, «лăпкă ирсĕрлĕхе» тăрă шыв çине каларакан чаплă писатель А. П. Чехов та курса тăнă, лайăх ăнланнă. 1903 çултах, февраль уйăхĕнче, паллă актер тата драматург А. И. Южин-Сумбатов патне çапла çырнă вăл: «Горькин тава тивĕçлĕ ĕçĕ вăл ытахальтен кăмăла кайнинче мар, вăл мещенлĕх çинчен Российăра, çавăн пекех пĕтĕм тĕнчере пуринчен маларах тата лăп та шăп общество хăй те мещенлĕхе хирĕҫ протеслеме хатĕрленсе çитнĕ вăхăтра, йĕрĕнсе, хаяр курăманлăхпа каласа пуçланинче».

Горькин малтанхи произведенийĕсене тĕплĕн вĕренни питех те кăтартуллă.

---

[1]) М. Горький. «Забытые рассказы». 1893—1918. Умстатьи тата редакцийĕ С. Д. Балухатыйăн. Комментарийĕсем С. В. Суховăн. ГИХЛ, 1940.

[2]) М. Горький. «Горемыка Павел». Повесть. «Новый мир». 1941 ҫ. 4-мĕш кĕнеке.

Кунта чи малтанах çамрăк писатель пурнăҫа лайăх пĕлни, вăл нумай тĕрлĕ темăсем илсе çырни, унăн творчестви идея енчен питех те анлă та тарăн пулни тĕлĕнтерет. Художникăн ăслă та сăнама пĕлекен куçĕсем ун чухнехи Российăри кашни сий хушшинчи отношенисене çавăрса илеҫҫĕ. Вулаканăн куçĕ умĕнчен çапкаланчăксемпе обывательсем, ыйткалакансемпе купецсем, «Российăран тухнă выçăпа аптăранăскерсем», «революционерсем тата Российăн «чунтан тарăхакан» интеллигенчĕсем туса иртеҫҫĕ. Литературăллă творчествăн миҫе тĕрлĕ кăна формисем, приемĕсем çук пулĕ кунта: очерк, юмах, легенда, халлап, аллегори, жанрăвăй картинка, пĕчĕк калав тата пысăк полотнолла повĕҫсем.

Çак малтанхи набросоксемпе зарисовкăсене вуласан, каярахпа вĕсем хальхи пуринпĕн те паллă чаплă произведенисен прообразĕсем пулнине çăмăллăнах туйса илетĕн. Вĕсенчен нумайĕшне, уйрăмăнах «Два босяка», «На соли», «Исключительный факт», «Встряска» ятлисене автор хăйĕн пурнăҫĕнче пулса иртнĕ фактсем тăрăх çырнă.

Пирĕн умра чăн-чăн художник алли çырнă чăн-чăн пурнăҫа кăтартса паракан страницăсем. Çак манăҫа юлнă произведенисене вуланă чухне Горькин çамрăк сассине, харпăрлăх стройĕн ĕмĕрхи хаяр тăшманĕн хĕрӳллĕ сассине илтетĕн.

Горький «пурнăҫăн усал енне, ирсĕрлĕхне тата ултавлăхĕпе хаярлăхне» кăтартса, хăйĕн ĕмĕрне паттăр савăнăҫпа, илемлĕ çиллеслĕхпе тата мăнкăмаллă тӳрмелĕхпе ирттерекен «çирĕп чунлă» пăлхавҫăна çӳле çĕклет. «Сукăрсен куçĕсене уçас пулать, ун пекки-сем пиртĕ нумай-ха, çынсем пурте хăйсен пурнăҫĕ киревсĕр, тĕрĕс мар тата ирсĕр иккенне курса хăраччĕр, унтан йĕрĕнччĕр» («Часы»). Акă вăл тискер пурнăҫăн хăрушă чăнлăхĕ: ачисене çырăва вĕрентмĕ май тупас тесе, амăшĕ хăйĕн ӳтне сутать («Женщина с голубыми глазами»); вуникĕ çулхи ача, хăйĕн тăванĕсене выҫса вилесрен хăтарас тесе, купец лашисен ури айне пырса выртать,—таптаса вĕлересен — укҫа парĕҫ» («Колюша»); сутăҫă хăйĕн ирсĕр ĕçĕнчен хăй йăлăхса анаслакан пуличченех пĕчĕк ачана мăшкăлласа асаплантарать, мĕншĕн тесен пĕчĕк ача хăйне хăй хӳтĕлеме пултарайманнăй тата выçă вăл. («Вор»).

Çак тискер чăнлăха тутă хырăмлă мещен курма та, илтме те пултарайманнăй, уншăн тĕнче ырă та ăшă, вăл хăйĕн нимĕн усăсăр ырă пурăнăҫĕпе таврари ирсĕрлĕхе тата усал ĕçсене çеç ӳстерет. Антив, унăн этем прависĕр тăратса хăварнă арăмĕ тата ачисен амăшĕ протеслетĕр, («Соң Коли», «Свободные дни»), антив, мăшкăл тӳссе вараланнăй хĕр хирĕçлетĕр («Пробуждение»), антив, айăпсăр хурпулнă мĕскĕн Рыжик шыва сиктĕр («Убежал»), хĕсĕрлесе, тарăхтарса çитернĕ хĕрарăм вилĕм йăллинче çăлăнăҫ шыратăр («Несогласный») — мещеншĕн пулсан ку вăл нимех те мар, ăна пурăнăҫран тимĕр карта уйăрса тăрать, çавăнпа та вăл, ăна пурăнăҫ ниҫăҫан та тĕкĕнес çуккине шанса, хăйĕн лăпкă пурăнăҫĕшĕн савăнать («Нищенка»). Ыйткаласа çӳрекен çичĕ çулхи хĕрачана ӳлĕм мĕнле хăрушлăх кĕтнине тата вăл хăй прокурор пулса тăнă май, çитес çывăх вăхăтрах суд умĕнче «çак хĕрачана тĕрмене хупса лартмалла» тесе калама тӳрĕ килессине пĕлсе тăрать пулин те, вăл халĕ ун çине çавăрăнса та пăхмасть, мĕншĕн тесен вăл «сывăх çынна ырă тăвас кăмăлпа хăйне-хăй хумхантарма шутламасть. Ана пĕр япала çеç тарăхтарать: «Ниушлĕ ирĕклĕ пулма май çук? Ниушлĕ мĕн те пулсан тăвассинчен, тĕрлĕрен хумханусенчен хăтăлма май çук? Апла пулсан—чуралăх ку!» тет вăл. Вара, хăйĕн пурăнăҫне çăлса хăварас тесе, вăл шыва путакан савнă хĕрĕн аллинчи хăмана туртса илет те, çав хăмаран тытса, ним хумханмасăрах, пулăшу парасса кĕтсе тăрать («Сон»).

Ирĕксĕрлĕх, намăса пĕлменлĕх, тискер кайăк пек пĕр вăтанмасăр хăйĕн çеç тăрăшасси, ултав тата киревсĕрлĕх мещен пурăнăҫĕнче кулленхи йăла пулса тăрать, унсăрăн вăл пĕр утăм та тумасть. Кун пек обществăра хĕнхур, асап тӳсекенсем çеç, хăйсем çинчен манса, илемлĕ, хăюллă ĕçсем тума пултараҫҫĕ. Вăрă Семага, хăйне полипейскисем хăвалана вăхăтра, такам пăрахса хăварнă пĕчĕк ачана курать те ун умĕнчен иртсе кайма пултарайманнăй, ăна аллине илсе хăйĕн кăкри сумне тытать («Как поймали Семагу»); ыйткаласа тата вăрлакаласа çеç тăранса пурăнакан Акулина асанне хăйĕн çĕр алтса тунă пӳртĕнче хăй пекех телейсĕр çынсене пăхса, ăмăтса пурăнать («Бабушка Акулина»), Ванька Мазин ятлă плотник «çыннăн чунне хĕрхенсе», хăй пĕтесрен хăрамасăрах, подрядчика вилĕмрен çăлса хăварать. «Чăлах Ванька Мазин хăйсен хуçине тем çинчен кăтартса панине тата лайăхах кăтартса панине пĕтĕм артель ăнланать». («Ванька Мазин»).

Çак малтанхи произведенисенчех Горький хăйне художествăллă пĕтĕсӗрӳн мастерĕ пек кăтартать. Хăйĕн геройĕн уйрăм пурнăҫĕ урлă вăл этемĕн личноҫне пăсса чăлăхлакан социаллă отношенисене тата йĕркесене яруҫҫăнах кăтартса парать.

Харпăрлăх обществине «питлес тата тавăрас кăмăлпа» унăн суялăхне, ултавне, унăн хура юлнă ирсĕрлĕхне яруҫҫăн кăтартса панипе пĕрлех, Горький пултарулăллă чĕрĕ вăя, этемме ĕненме нихăҫан та, пĕр самантлăха та чарăнса тăман. Горький этемме йывăр йăхран вăранма, пăхăнса пурăнма вĕрентекен чуралăх сĕрĕмне хăй çинчен сирсе пăрахма йыхăрнă, «этем ĕçĕсене туса тăракан пек çеç мар», çак çĕрĕн чăн-чăн хуçи пулса пурăнма чĕннĕ. Вăл халăхсен «тĕнчери чи çутă демократиллĕ çĕршывĕ» пулма хатĕрленсе çĕкленекен Российăна лайăх пĕлсе тăнă. Çĕнĕ тĕнче, çĕнĕ пурăнăҫ килессе çирĕп шанни, мĕншĕн тесен тĕнчене улăштарма пултаракан вăйсем пурринĕ лайăх курнă вăл.

«Вырăс литературине хăйĕн влиянине парас тĕлĕшпе Горький Пушкин пек, Гоголь пек, Толстой пек улăпсем хыҫҫăн тăрать, вĕсен аслă традицийĕсене пирĕн вăхăтра мухтавлăн малалла илсе пырать», тенĕ Молотов юлташ.

Çавăнпа та ĕнтĕ пирĕн çĕршывра тата пĕтĕм тĕнчери ĕҫҫыннисен куçĕ умĕнче пролетариллĕ, социализмлă литературăн никĕсне хываканĕ, унăн мăнаслашшĕ Горький пулса тăрать те.

Вл. ГРИГОРЕНКО.

И. В. Сталин юлташпа А. М. Горький мавзолей патĕнче (1931 ҫ.). (Фотохроника).

☆

Цензура А. М. Горький произведенисене сарма чарни

Патша цензури А. М. Горький произведенийĕсене питех те курайман. Революцилле, социализмлă тата тĕнче хирĕçлĕ идейăсене сарнăшăн, А. М. Горький çырнă «Буревестник», «Сокол», «Мать», «Жизнь ненужного человека», «Врачи», «В людях», «О еврейском вопросе», «Один из королей республики» тата унăн ыт. нумай произведенийĕсене хĕсĕрленĕ.

1916 çулта Кострома губернаторĕ пичет ĕçĕн главнăй управленин начальникне, «Поволжский вестник» хаçата пичетленнĕ «В людях» ятлă калавра Горький «турă амăшне хирĕçле калана сăмахсем» пурри çинчен пĕлтернĕ. Хаçатăн издатель-редакторне, ӳлĕмрен хаçатра правительствăна тата тĕнче хирĕçле çавăн пек статьясемпе калавсем пулсан, хаçата хупасси çинчен асăрхаттарнă.

Патша цензури Горький произведенийĕсене сарма чарнă тата вĕсене пăсса кăларнă пирки, унăн хăйĕн чылай произведенийĕсене ютҫĕршывсенче пичетлеме тивнĕ. Вăл произведенисене Российăна кӳрсен цензура питĕ хытă сыхланă. 1909 çулта, Парижра француз чĕлхипе пичетленсе тухнă «Мать» романа Российăна кӳрсе килме пачах чарнă. Цензор Модля хăйĕн отзывĕнче кун пирки çапла çырнă: «Горький вăл произведенине малта пыракан, государственăн хальхи стройне аркатса çĕмĕрме тăрăшакан рабочисене мухтать. Кунсăр пуçне тата Максим Горький унта православнăй чиркĕве хирĕç пырать тата император арăмĕ çинчен лайăх мар калать».

Хаяр цензурăн çакăн пек чăрмавĕсене пăхмасăр, Горький произведенийĕсем ĕçҫыннисем патне çитсе, вĕсене самодержавине тата эксплоататорсене хирĕç революцилле кĕрешĕве чĕннĕ.

А. М. Горький произведенийĕсем

Паян, июнĕн 18-мĕшĕнче, пролетариллĕ аслă писателе А. М. Горькине тискеррĕн вĕлернĕренпе 5 çул тулать. ССР Союзĕнчи нумай хуласемпе ялсенче юратнă писателĕн пурнăҫĕ тата творчести ячĕпе вечерсем, лекцисемпе докладсем ирттереҫҫĕ.

Горькин чаплă произведенийĕсене пирĕн çĕршыври ĕçҫыннисем питех те юратса вулаҫҫĕ. Пĕтĕм Союзри кĕнеке палатин даннăйĕсем тăрăх, ССР Союзĕнче 1917 çултан пуçласа 1941 çулти июнĕн 1-мĕшне çитиччен унăн произведенийĕсене пурĕ 44,58 миллион экземпляр пичетлесе кăларнă. А. М. Горькин кĕнекисем вырăс чĕлхипе 35,55 миллион экземпляр, ытти чĕлхесемпе 5 миллион экземпляр ытла пичетленсе тухнă.

АСЛА ПАТРИОТ

☆ ★ ☆

1891 çулта Атăл çыранĕ тăрăх Алеша Пешков утса пынă. Вăл Чулхуларан тухнă. Царицын патĕнче Алеша Пешков Дон еннелле пăрăннă, шахтерсен станцисем патĕнчен Ростова иртсе тухнă, Украина урлă каçнă, Бессарабире, Дунай патĕнче пулнă, Крым çыранĕ тăрăх Керчь проливĕ патне çитнĕ, унтан Кубане каçса кайнă, Дарьял ущельипе тусем урлă Тифлиса пырса çитнĕ. Пĕр çултăлăк иртсен кунта «Кавказ» хаçатра, унăн пĕрремĕш калавĕ пичетленнĕ, пирвайхи хут «Максим Горький» çуралса тухнă.

«Эпĕ Руç тăрăх çӳрени, — тесе çырнă кайран Горький, — çапкаланса çӳреме тăрăшнинчен мар, хам ăçта пурăннине, ман тавра мĕнле халăх пурăннине курма тăрăшнинчен килнĕ».

Горький мĕн курнисем вĕсем вăл халăх пурăнăҫĕпе пирвайхи хут паллашни пулман. Вăл, мастеровой ывăлĕ, халăхăн ĕçне, унăн пурнăҫне мĕн ачаранах сăнанă, хăй те курьер вырăнĕнче, пароход çинче савăт-сапа çăвакан пулса ĕçлеме, иконăсем ӳкерекен мастерскойра ученик пулса, грузчик, пахчаҫ, çăкăр пĕçерекен, сторож, пулăҫ пулса ĕçленĕ. Революцилле çамрăксемпе паллашма,ареста лекме ĕлкĕрнĕ, тĕрмере ларнă тата ăна полици енĕпе асăрхаса тăмалла тунă.

Горький тăван çĕршыв çулĕсем тăрăх çӳренĕ, помещиксемпе фабрикантсен кĕсйишĕн тăвакан йывăр ĕç, каторгăри пек ĕç çапса хĕснĕ, жандармери хĕçĕ амантса пĕтернĕ çĕршыв унăн куçĕ умĕнчен нихăҫан та кайман. Халăхăн мĕнпур хĕнхурĕ тумламăн-тумламăн унăн уçă чĕрине пухăннă. Вара Алеша Пешковран Горький—халăхăн хӳтлевçи, ăна ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен борец пулса тăнă.

Горький хĕçпăшалĕ художествăллă сăмах пулнă. Хăйĕн произведенийĕн кашни йĕркипех вăл самодержавине çапнă, хăравçă та ирсĕр, çĕршыва сутма хатĕр тăракан буржуазине çапнă. Халăхра вара вăл нациллĕ мăнаслăхăн нихăҫан сӳнми туйăмне, эксплоататорсен пылчăклă атти таптанă тăван çĕршывшăн халăх чунĕ ыратнине уçса кăтартнă.

Горький çичĕ калавсенчен пĕринче рабочи-столяр Ерзмпа унăн хуçи-работникант хушшинче çакăн пек калаçу пулса иртет: «...эсир, хуçасем, хăвăра ырлăх кӳрсе, хăвăра мĕн кирлине йăлтах тупса пурăнатăр, государство çинчен, Россия çинчен вара сирĕнген хăтĕ шухăшлатăр-ши?

— Чим-ха, мĕнле государство тараннах каласса кайрăн-ха?

— Питех те просто... Ăçта пурăнатăр эсир — Российăра-и? Камран усă куратăр эсир? Российăран! Ана мĕн паратăр?..»

Хăйĕн хăюллă сăмахĕсемшĕн Ефим тĕрме тухнать.

Российăна пусмăрлакансене хирĕç Горький пĕччен мар кĕрешнĕ. Вăл пролетариата — вĕсене çитиех революцилле пĕртен-пĕр класса — пĕр сĕре пĕтĕҫтерсе пĕрлештерекенсемпе пĕр рете, çĕнĕ, социализмлă Российăна кĕрешекенсен хăватлă çар ретне тĕрать.

«Патша палачĕсем, дворянсемпе капиталистсем пирĕн чаплă тăван çĕршыва пусмăрланине тата мăшкăлланине курса тата туйса тăнипе пирĕн чĕре нимĕнрен те ытларах ыратать».

Çапла калаҫ Ленин, пролетариатăн аслăран та аслă çулпуҫĕ, Горькин çывăх тусĕ.

Хăйĕн кунçулне пролетариатăн тата унăн партийĕн кунçулĕпе çыхăнтарса, Горький революци юрăçи пулса тăнă. Ладо Кецховелине вĕлернĕ пирки РСДРП-ăн Бакури комитечĕ кăларнă листовка Горький «Сокол çинчен хунă юрăн» сăмахĕсемпе — «О, хăюллă Сокол, эсĕ тăшмансене хирĕç пыракан кĕрешӳре юн тăкса ӳкрĕн» тенĕн сăмахсемпе пуçланнă.

«Тăвăл умĕн» ятлă статьяна Владимир Ильич Ленин Горький çырнă «Çилтăвăл йыхравçинчи» çак сăмахсемпе вĕçленĕ: «Татах та вăйлăрах кĕрлетĕр тăвăл!»

Горький, тенĕ Ленин, «хăйĕн художествăллă аслă произведенийĕсемпе хăйне Российăри тата пĕтĕм тĕнчери рабочи движенипе çирĕп сыхăнтарнă...»

1905 çулти декабрьти хĕçпăшаллă восстани кунĕсенче Горький хваттерĕнче бомбăсем хатĕрленĕ, рабочисен дружинисем пухăннă. Горький восстани пуçланă çынсене средствăсемпе хĕçпăшалсем тупма пулăшнă. Революци поражени тӳсни ăна хăратса пĕрахман. Ана ирĕксĕрех ютҫĕршыва тухса кайма тивнĕ, анчах вăл художествăллă сăмах хĕçпăшалĕпе усă курса, царизмпа буржуазине хирĕç кĕрешме пăрахман. «Тăшмансем» ятлă чаплă пьесăра Горький хăюллă та тӳрĕ кăмăллă рабочи-борецсене сăгăлтатласа кăтартнă, колашки сценăра вĕсем çинчен çапла калана: «Çак çынсем çăтӑреҫҫех!»

Горький революцилле вырăс пролетариатне кăтартса панă, унăн чи лайăх енĕсем Павел Власовпа Ниловнăн — «Амăшĕ» роман геройĕсен образĕсенче ĕмĕрлĕхех палăрнă.

Гениллĕ художникăн пурнăҫĕ пролетариатăн тата унăн малти отрячĕн — большевиксен пурнăҫĕпе тата кĕрешĕвĕпе нимĕн уйăрлми çыхăннă. Алексей Максимович хăй большевикла партине çывăх тăнипе мухтанă, савăннă. Хăй Ӳ (Лондонри) съездăн ĕçĕсене хутшăнни çинчен вăл çапла çырнă: «Сасартăк, юмахри пекех, эпĕ Российăри социал-демократла партин съездĕнче. Паллах — праздник!»

Российăн малашлăхĕ пролетариат аллинче пулнине шанса тăнă писатель-борецла Российăн вăхăтлăх «хуçисем», «власпа кӳпĕнсе шыçăннă прохвостсем» курайман. Вĕсем шиклеми-шиклене унăн кашни утăмне асăрхаса тăнă. Горький поезд çине ларнă кăна-ха — вĕсем телеграмма яма та ĕлкĕрнĕ: «Ноябрĕн 5-мĕшĕнче почтовăй çине ларса писатель Максим Горький Мускавран Крыма пырать. Çул çинче демонстрацисем пулма пултараҫҫĕ. Ана вĕсем полици енĕпе асăрхаса тăнă, тыт-гыта арестлеме, провинцири тĕттĕм кĕтессене кăлара-кăлара янă, Петропавловски крепоçĕн Трубецки бастионне хупса лартнă, анчах та Горькин хăватлă чун-хавалне нимĕн те хуçайман! «Сыр вилет, халăх вилĕмсĕр», — тенĕ вăл, революцине тытса чарма çуккине, Россия пролетариатăн социализмлă тăван çĕршывĕпе пулассине шанса тăнă. «Амăшĕ» романри çак строкасем Горький малашнехине лайăх курса тăни çинчен каласҫĕ: «Мĕнле лайăх çынсем, Ниловна! Эпĕ çамрăк рабочисем çинчен калатăп — çирĕп, сисĕмлĕ, пурне те пĕлессишĕн çунаҫҫĕ. Вĕсем çине пăхатăн та куратăн — Россия çĕр çинчи чи çутă демократи пулса тăрĕ!...»

* * *

Горький—Çилтăвăл йыхравçи чĕннĕ революциллĕ тăвăл пуçланчĕ. Октябрьти Социализмлă аслă революци çĕнтерчĕ. Ҫҫыннисен чăн-чăн тăван çĕршывĕ пулса тăнă çĕршывра социализм строительстви анлăн сарăлса карĕ.

Горький çĕнĕ пурнăҫ тăваканскен, ăна хӳтлекенсен пĕрремĕш ретне тăчĕ. Вăл пурăннă, ĕçленĕ, кĕрешнĕ, унăн «хăйĕн тăван халăхĕн телейĕ — унăн савăнăҫĕпе телейĕ» пулнă.

Горький сасси пĕтĕм тĕнчипех янăраса илтĕннĕ, Совет Союзĕ çинчен буржуазин саракан элек тĕтринне сирсе пынă. Унăн сăмахĕ ССР Союзĕнче пулса иртекен ҫҫын чапне, вĕсем мĕнле вырăн йышăнса тăнине малта пыракан пĕтĕм этемлĕх умĕнче уçса кăтартнă. Миллионшар çынсене тавăнчăвăллă ĕç валли хавхалантарса çĕклекен парти çинчен Горький уйрăмах савăнса калана: «эпир Владимир Ильич Ленинăн гениййĕпе çутăлса тăракан çĕршывра, Иосиф Сталинăн тимĕр пек çирĕп ирĕкĕ ывăнма пĕлмесĕр тата тĕлĕнмелле лайăх ĕçлекен çĕршывра ĕçлесе пурăнатпăр».

Горький революцилле публицистикăн чаплă образецĕсене панă. Кунта кашни сăмах тăван çĕршыва хĕрӳллĕн юратни тата унăн тăшманĕсене хирĕçле курайманлăх туйăмĕ тапса тăрать. Горький çырнă статьясем — «Вуна çул», «Чăлăх çинчен», «Пролетарилле курайманлăх», «Тăшман паранмасть пулсан — ăна пĕтереҫҫĕ» ятлă статьясемпе ыттисем — совет патриотизмĕн манифесчĕсем пулнă.

Горький советлă тăван çĕршыва пĕтĕм чĕререн, çулăмлăн юратнă. Çĕршыва ун пек лайăх пĕлнĕ вырăс писателĕсем урăх никам та пулман, ăна социализмла çĕнетсе улăштарас тĕлĕшпе пуçланă гигантла пысăк ĕçе тимлĕн сăнаса тăнă. Горький икĕ хут — 1928 çулта тата 1929 çулта — ССР Союзĕ тăрăх нумай вăхăт хушшинче курса çӳренĕ, тахçан ĕлĕк хăй çуран çӳренĕ нумай вырăнсенче пулнă. Çĕршыв сăнсăмачĕ юмахри пек хăвăрт улшăнса пырать. Окуров хули пек тĕттĕм, юхăнчăк хуласем пулнă вырăнсенче социализмлă хуласем ялкăшса лараҫҫĕ. ССР Союзĕнче революци хыҫҫăн тунă ĕçсем, тесе çырнă Горький, «Союзри халăхсен пултарулăхĕ çинчен, унăн ĕçри героизмĕ çинчен, пирĕн çĕршывра ĕç искусство пулса пыни çинчен Ленинăн вĕрентĕвĕпе партийĕ тата Иосиф Сталинăн пĕрмаях ӳссе пыракан иккĕлми энергийĕ ертсе пыракан Советлă Социализмлă Республикăсен пролетариачĕ çĕнĕ культура, ĕç этемлĕхĕн çĕнĕ историне туса пыни çинчен пуринчен те лайăхрах каласа параҫҫĕ».

Совет патриотизмĕ вăл активлă, вăл строительне боецăн патриотизмĕ. Ана кăтартса паракан чаплă тĕслĕх—Горький пурнăҫĕ. Унăн пурнăҫĕн, чăннипех те гигантла пысăк ĕçре иртнĕ пурнăҫăн кашни кунĕ — тăван çĕршывăн мухтавĕшĕн чаплă ĕç туни пулнă.

Горький пуçланă тата пурнăҫа кĕртнĕ пĕтĕм ĕçсене шутласа кăларма та йывăр. Вăл темиçе çĕнĕ журнал тата издательствăсем организацинленĕ. Заводсемпе фабрикăсен историне çырасăçе организацинленĕ. Пĕтĕм совет литературине ертсе пынă. Экспериментальнăй медицинăн Пĕтĕм Союзри институтне организацилес ĕçрен пуçласа ачасем валли теттесем хатĕрлес ĕç таранах, чи тĕрлĕ ыйтусем тăрăх, вуншар çынсемпе тĕл пулса калаҫнă. Горький пуçарнипе, партин Центральный Комитечĕ ятарласа йышăннă решенире пурăнăҫĕнче пуçарупа «ССР Союзĕнчи граждан вăрçин историйĕ» пичетленсе тухать. Çаксемпе пĕр вăхăтрах аслă писатель тĕлĕнмелле вăйлă художествăллă произведенисем çырнă. Вăл çырнă «Клим Самгинăн пурнăҫĕ» ятлă роман Российăн хĕрĕх çул хушшинчи художествăллă историне уçăн та тĕрĕс кăтартса панă.

Совет çамрăкĕсене Горький тăван çĕршыва юратма, ăна усă кӳрес тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлеме вĕрентнĕ. Вăл пирĕн çамрăксене гражданинăн чаплă туйăмне парса пынă: «Акă ĕнтĕ çамрăксем валли тăван çĕршыв çĕнсе илнĕ. Вĕсем, çамрăксем, — калама çук пысăк, пуян çĕршывăн хуçи...» Горький çамрăксене вĕрентсе çĕршер статьясемпе çырусем çырнă. Алексей Максимович комсомолăн кашни пуçарăвне пурнăҫа кĕртме пулăшнă. Чунĕпе ĕмĕрех çамрăк пулнă çын, вăл çамрăксен çитĕнĕвĕсене савăнса-савăнса тăнă, çапла çырнă: «Çамрăксен утăмĕсем ытларах та ытларах çирĕплене пыраҫҫĕ, ӳт-пӳ çавтери хăвăрт тата илемлĕ воспитани илсе çитĕнекен тата боевой, геройла чунхавалĕ çавтери çулăмлă, çĕнтерӳллĕн чечекленсе пыракан çĕршывра пурăнас хаваслăх унăн куçĕсенче ытларах та ытларах сутăлать...».

Капитализмлă йĕритавралăх çинчен, буржуази çĕнĕ вăрçă хатĕрлени çинчен тăлăпах астутарса тăрса, Горький совет халăхĕн боевой хатĕрлĕхне хăпартса пынă. Вăл Хĕрлĕ Çара — хăйĕн мĕншĕн çапăçмалла пулассине лейăх пĕлсе тăракан боецсен хăватлă çарне мухтанă.

Пирĕн аслă тăван çĕршыв Горькишĕн пурнăҫа кĕнĕ ĕмĕт çĕршывĕ пулнă. Пирĕн çĕршыв чăннипех те çĕр çинчи чи çутă демократи çĕршывĕ пулса тăчĕ.

«Правда» хаçат Сталинла Конституци проектне пичетлесе кăларнă вăхăтра аслă писатель чирлĕ выртнă. Чир кăтартакан асап çинчен манса, вăрăн çинчен çăлăнса тухас тесе, Горький халăх патнелле, хăйĕн аслă тăван çĕршывĕн пурнăҫĕ патнелле туртăннă, социализмăн çĕнтерĕвĕсем çинчен савăнса калана.

Çулăмлă патриота, социализм строительствин юрăçне, Сталин туснă — Горькине тăван çĕршыва сутакан троцкистла-бухаринла ирсĕрсем кӳрайман. Çавăнпа та вĕсем ăна тупăка тĕксе кĕртнĕ.

Анчах та Горький сăмахне вĕлермĕ май çук! Унăн сăмахĕ, халиччен ĕнтĕ пек, тăшмансен пуçĕ тĕлĕнче аслатăк пек, миллионшар совет патриочĕсене хĕвел пек çутатса тăрать. Халĕ те, ялан пек, пирĕн тимĕр пек çирĕп колоннăсен малти ретĕнче тăрать Горький; халĕ те, ялан пек, ăна туспа туса калаҫнă сăмахсем.

И. РОТИН.

ЕВРОПĂРИ, АФРИКĂРИ ТАТА АЗИРИ ВĂРÇĂ

(Вăрçă ĕçĕсен дневникĕ)

Англипе Германи хушшинчи фронтра иртнĕ икĕ кун хушшинче авиаци ахăвлăхĕ пысăках пулман. Германи самолечĕсем пуринчен ытларах тинĕсем çинче кĕрешнĕ. Германи командованийĕн сводкинче Англин суту-илӳ тумалли темиçе суднине путарни çинчен пĕлтернĕ. Германи авиацийĕ çавăн пекех тата Кăнтăр тата Кăнтăр-Хĕвелтухăç Англири портсен сооруженийĕсемпе çар предприятийĕсем çине бомбăсем пырса пăрахнă. Июнĕн 14-мĕшĕнче ирхине, тесе пĕлтерет Рейтер агентстви, Англи бомбардировщикĕсемпе истребителĕсен соединенийĕ Сент-Омерти аэродром çине бомбăсем пырса пăрахнă. Кунсăр пуçне, Англи истребителĕсем Шербург сывлăхĕнчи аэродром çине тата Германин Ла-Манш проливĕнчи патруль судни çине пулеметсенчен пырса пенĕ.

Ыран июнĕн 15-мĕш тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсем Кельн районĕнчи промышленноçлă объектсем çине пырса тапăннă. Англи çар карабĕсем Германин грузовой суднисене—«Бисмарк» тата «Принц Евгений» каралсем валли снабжени базисем пулса тăмалла пулнă суднăсене хăваласа çуреççĕ. Çак операцисем вăхăтĕнче Германин 6 грузовой суднине тата хĕçпăшаллăнтарнă пĕр траулерне путарнă.

Июнĕн 15-мĕшĕнче кăнтăрла Англи бомбардировщикĕсем Германин Голландипе Франци сыранĕсем патĕнчи, çавăн пекех тата Германин территориальнăй шывĕсем çинчи суднисене хирĕç сĕнĕрен кĕрешме пуçланă. Ыран июнĕн 16-мĕш тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕсем Рур, Кельн тата Ганновер çине пырса тапăннă. Англин ытти самолечĕсем Дюнкеркри доксем çине пырса тапăннă. Англи истребителĕсем Франкири аэродромсем çине пырса тапăннă.

* * *

Вăтаçĕр тинĕсĕн бассейнĕнчи вăрçă ĕçĕсем юлашки кунсенче сисĕнмеллех вăйланнă. Германипе Итали авиацийĕ туринчен ытларах Англи опорлă базисĕне хирĕç тата Англи тинĕс-çар флочĕн Вăтаçĕр тинĕсĕнчи соединенийĕсене хирĕç кĕрешет. Вăтаçĕр тинĕсĕн хĕвелтухăç пайĕнче, тенĕ Германи командованийĕн сводкинче, Германи бомбардировщикĕсем Англин пĕр çăмăл крейсерне путарнă. Германи авиацийĕ, тенĕ малалла сводкăра, Кипр утравĕ çине пырса тапăннă, аэродромсем çине бомбăсем пăрахнă. Гибралтартан хĕвеланăç енче, тесе пĕлтерет Германири информаци бюрозĕ, Германи бомбардировщикĕсем Англи суднисен караванне атакăланă. Июнĕн 15-мĕшĕнче, тесе пĕлтерет Гавас-ОФИ агентстви, Гибралтар çине тата тепĕр хут пырса тапăннă. Англи самолечĕсем Родос утравĕ çине бомбăсем пырса пăрахнă. Англин Вăтаçĕр тинĕсĕнчи подводнăй лодкисем, Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Италин 10 пароходне путарнă тата сизон кунĕ.

Сурçĕр Африкăра ытларах хаяр çапăçусем Соллум секторĕнче сарăлса пыраççĕ, унта Германи командованийĕн сводкинче малалла тăрăх, англичансен пысăк вăйĕсем атака пуçланă, анчах та çав атакăна Германипе Италин чăсĕсем сирсе янă. Хальхи вăхăтра çак районра çапăçусем пыраççĕ. Тобрук патĕнчи фронтра артиллерипе разведка отрячĕсен ĕçĕсем палăраççĕ.

Итали самолечĕсем, тенĕ Итали сводкинче, Мерса-Матрух çине бомбăсем пырса пăрахнă. Англи командованийĕ кăларнă коммюникере каланă тăрăх, Англи авиацийĕ Бенгази çине пырса тапăннă. Бомбăсем тивнипе портра пушарсем тухнă. Англи самолечĕсем çавăн пекех тата Мартубăпа Эл-Газалăри аэродромсем çине пырса тапăннă, тинĕс авиацийĕ Триполи çине бомбăсем пырса пăрахнă.

Хĕвелтухăç Африкăра, Абиссинире, тенĕ Итали сводкинче, лару-тăру улшăнман. Англи командованийĕ кăларнă коммуникере каланă тăрăх, англичансем Джиммăна хупăрласа илес тĕлĕшпе пуçланă операцисене туса пĕтереççĕ.

* * *

Сирири вăрçă ĕçĕсем, тесе пĕлтерет Рейтер агентстви Иерусалимри корреспонденчĕ, Сайда патĕнчен Дамаск патне çити анлă фронтра сарăлса пыраççĕ. Ытларах хаяр çапăсусем Ливан сыранĕнче, Сайда хулин районĕнче сарăлса кайнă. Июнĕн 15-мĕшĕнче Англи войскисем Сайдăна туртса илнĕ. Ассошиэйтед пресс агентствин корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Франци войскисем Сайда патĕнчен каялла чакнă, хальхи вăхăтра Нахр-Од-Дамур юханшывĕн районĕнчи позицисене йышăнса тăраççĕ. Ассошиэйтед пресс агентствин корреспонденчĕ Виширен пĕлтернĕ тăрăх, Англи войскисем Бейрут патнелле куçса пыраççĕ. Хальхи вăхăтра вĕсем Бейрут патĕнчен 12 миляра хĕрешеççĕ.

Гавас-ОФИ агентстви пĕлтернĕ тăрăх, июнĕн 15-мĕшĕнче Англин бронетанковăй чăсĕсем Кисве секторĕнче (Дамаск районĕнче) атака тума пуçланă. Франци чăсĕсем контратака пуçланипе англичансен каялла чакмалла пулнă. Кисве патĕнче тата Мерджайун районĕнче Франци разведкăллă отрячĕсем англичансен тылĕнче активлăн кĕрешнĕ. Рейтер агентствин Иерусалимри корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: Кисве патĕнчен хĕвелтухăç енче, Бурак районĕнче, флангри наступлени сарăлса пырать. Англичансем çак районран кăнтăр-хĕвелтухăç еннелле наступлени туса пыраççĕ. Çак наступлени Сирири çăрăн оборонин иккĕмĕш линине татса каçма май панă.

«Нью-Йорк геральд трибюн» хаçатăн Лондонри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Англи чăсĕсемпе де Голль генералăн войскисем çавăн пекех Нахр-Эл-Касимия юханшывĕн айлăмĕ тăрăх тăвалла наступлени туса пыраççĕ. Франçин Бейрутта Дамаск районĕнчи вăйĕсене пĕр-пĕринчен уйăрса яма тăрăшаççĕ.

Сурçĕр Сирире Иракран Сирипе Турци чикки тăрăх наступлени туса пыракан англичансен войскисем Рас-Эль- Айна сывăхне пырса çитнĕ (Турци чиккинче). Англи войскисен çак колонни, тесе пĕлтерет «Дейли экспресс» хаçатăн Канрти корреспонденчĕ, пушкăр урлă наступлени туса пырать, кунне 80 километр чухлĕ çул тăвать.

Франци командованийĕ кăларнă коммюникере каланă тăрăх, Хĕвелтухăç Сирире Иракран пынă англичансен бронетанковăй чăсĕсем Абу Кемальре Франци войскисене тĕл пулнă, малти поста туртса илнĕ.

Июнĕн 16-мĕш. (ТАСС).

КĔСКЕН

▲ Июнĕн 6-мĕшĕнче çĕрле темĕнле çĕршыв самолечĕ Испанири Эстепона çине бомбăсем пырса пăрахнă. (Эстепона — Гибралтар патĕнчен хĕвелтухăç еннелле 30 миляра).

▲ Австралия США-ра хăйне валли нумай танксем тума заказсем панă. Çак танксене Австралине çывăх вăхăтрах тăратма пуçлаççĕ. Австралире хăйĕнче те танксем туса кăларассине ӳстереççĕ.

Профсоюзпа комсомол кросĕ

Çитменлĕхсене халех пĕтерни кирлĕ

Республикăри штаб профсоюзпа комсомол кросĕн малтанхи кунĕнчи итогатунă. Кросăн малтанхи кунĕнче—июнĕн 15-мĕшĕнче республикăра ăмăртусем аван иртнĕ. Вăл комсомолецсем тата пĕтĕм ĕççыннисем физкультурăна юратăнине кăтартса пачĕ. Тулли мар сведенисем тăрăх, малтанхи кун пирĕн республикăра кроса 13.136 çын хутшăннă, вĕсенчен чылайăшĕ ГТО комплексĕн нормисене панă.

Кросăн пĕрремĕш кунне комсомолпа профсоюзсен Шупашкар районĕнчи организацийĕсем уйăрмах лайăх ирттернĕ. Унта 1.415 çын хутшăннă, вăл шутран комсомолецсем 547 çын. Çавăн пекех, Елчĕк районĕнче те кроса ăнăçлăн пуçланă, малтанхи кун кроса 947 çын хутшăннă. Вĕсенчен чылайăшĕ ГТО нормисене панă.

Профсоюзпа комсомолăн Куславкка, Вăрмар тата Шăхасан районĕнчи организацийĕсем те лайăх результатсем кăтартнă.

Анчах, пĕтĕм республикăна илсен, кросс ителĕкĕсĕр пырать. Уйăрăмăнах, Канаш, Кувакино, Советски, Улатăр районĕсем тата Шупашкар хули юлать. Комсомолпа профсоюзсен çӳлте асăннă районсенчи организацийĕсен руководителĕсем иртнĕ ăмăртусенче пулнă йăнăшсене шута илмен, вĕсем кроса хатĕрленес ĕç хăй тĕллĕн пулса пырасса шанса ларнă.

Профсоюзпа комсомол кросне ирттерес ĕçре вырăнти хăшпĕр парторганизацисем ситуленĕсĕр пулăшса пынине те палăртса хăвармалла. Кувакино районĕнче малтанхи кун кроса пурĕ те 51 çын çеç хутшăннă. Апла пулсан та ВКП(б) райкомĕ тата унăн çарăç отделĕ ку ĕç çине кирлĕ пек çаврăнса пăхман, вĕсем кроса ирттересси комсомолпа профсоюза çеç тивет тесе шутланă. Шупашкар хулинче те çавăн пекех. Кунта ВЛКСМ хула комитечĕн секретарĕ Эрре юлташăн тата хулари месткомсен айăпĕнче кросăн малтанхи кунĕ иртменпе пĕрех, пурĕ те 400 çын çеç хутшăннă, июнĕн 16-мĕшĕнче—16 çын çеç. Кроса начар хатĕрленнĕ пирки çынсем чупма хатĕрленсе ситмен пулнă.

ВКП(б) хула комитечĕн çарăç отделĕ (заведующийĕ Алексеев юлташ) ЦК ВЛКСМ тата ВЦСПС йышăннă решенине пурнăçа кĕртмесĕр тăракан организацисен руководителĕсем çине либералла пăхать.

Кросăн ăнăçлăхĕ судьясен коллегин ĕçĕнчен те чылай килет. Физкультура организацийĕсем судьясен ĕçне халĕ те кирлĕ пек организацилемен. Ку ĕç уйăрмах районсенче начар пырать. Физкультурăпа спорт ĕçĕсен республикăри комитечĕн çаксенчен тивĕçлĕ вывод тумалла.

Комсомолпа профсоюз членĕсене кроса хутшăнма пур условисене те туса памалла. Çавăн пек тусан çеç эпир ЦК ВЛКСМ тата ВЦСПС кроса ирттересси çинчен панă кăтартăва чыслăн пурнăçлама пултаратпăр.

Комсомолецсемпе профсоюз членĕсем! Хăвăр организацин, хăвăр республикăн чысĕшĕн кĕрешĕр!

ТЕАТР САМОДЕЯТЕЛЬНОÇĔН РЕСПУБЛИКАРИ СМОТРĔ

Тăххăрмĕш кун

...Сцена çинче Масс тата Куличенко сырнă «Сады цветут» ятлă комеди пырать. Строительсен клубĕн залне халăх туллиех пухăннă. Халăх хăшпĕр чух чăтаймасăр кулса ярать, чаршав хупăнсан нумайччен алă çупать...

Калама çук вăйлă комеди. Çак комедине пирĕн аслă çĕршыври кашни театр тенĕ пекех лартнă, лартать те. Мĕншĕн тесен, «Сады цветут» комеди совет çамрăкĕсен хаваслă та телейлĕ пурнăçне тĕкĕр çинчи пек ӳссăн сутатса кăтартать. Вăл пирĕн çамрăксен культурине ӳстерес тĕлĕшпе пысăк вырăн йышăнса тăрать.

Комедине лартма çăмăлах мар. Анчах та Çĕмĕрлери древкомбинат сумĕнчи драмкружок çак йывăрлăха çĕнтернĕ.

Вĕсем пирĕн хĕрсемпе каччăсен сăнарне пысăк мастерлăхпа кăтартса пама пултарчĕç. Зрительсене артистсен вăйăн мар, паянхи чăн-чăн илемлĕ пурăнăç куранать. Çакă пурнăçра пурте пĕр хисепре: «ваттисемшĕн ялан хисеп, çамрăксемшĕн умра çулсем асла».

Владимир рольне вылякан Н. Храмов совет интеллигенцин образне лайăх сутатса пачĕ. Вăл культурăллă, пур çĕрте те хастарлă. Унăн савнийĕ Таня (выляканĕ О. Далиская) студенткăн хĕрӳллĕ юратуне витĕмлĕн кăтартса пачĕ. Владимирпе Танян таса юратуне курсан вĕсене кураканăн чĕререн савăнать, ырă сунать.

Ученый Карп Иваныч ролĕнче С. Карпов вылять. Унăн вăйăнче вăл чăнласах мичуринец иккенне, хулапа ялăн культурине çӳле çĕклессишĕн тăрăшакан старик иккенне куратăн.

Çавăн пекех, Б. Колесников та Свертчок рольне çавтери лайăх выляса пачĕ.

...Садсем чечекленеççĕ. Чечекленет пирĕн çамрăклăх. Вĕсем кирек ăста та телейлĕ. Нумайччен хăйсен çирĕпленнĕ юратуне каялла сӳтме пуçтанă Володяпа Таня яланлăхах пĕрлешеççĕ. Вĕсене ваттисем ырă сунса пиллеççĕ. Хăй чыслăхра пурăннипе ватă садовод та савăнать. «Пирĕн çĕршывра ачасем çеç мар, ватă аттесем т улшăнă», — тет вăл, хавхаланса.

«Сады цветут» комедине лартса, древкомбинат коллективĕ смотрта пысăк çитĕнӳ турĕ.

ФУТБОЛ

„Красная звезда“ команди çĕнтерчĕ

ÇĔМĔРЛЕ. (**Чăваш Коммуни» корр.**). Иртнĕ вырсарникун комбинат стадионĕнче «Красная звезда» тата «Спартак» спорт обществисен командисем тĕл пулса вылярĕç.

Вăйăн малтанхи таймĕнче «Спартак» команди лайăх выляни палăрчĕ. Вăйă пуçлансан 10 минутранах спартаковец М. Мирошниченко «Красная звезда» алăкне мяч тапса кĕртет. Тепĕр 5 минутăран счет танлашать. Спартаковецсем ытларах тапăнма тытăнчĕç. Пĕрремĕш тайм пĕтиччен вĕсем тата икĕ мяч тапса кĕртрĕç.

Иккĕмĕш таймра та вăйă хĕрсех пычĕ. Уйăрăнах «Красная звезда» командин нападенийĕсем лайăх выляни сисĕнет. Спартаковецсем ăна шута илмеççĕ, защитăра вылякансемех хăшпĕр чухне нападенине куçаççĕ. Анчах вăл нимĕнле результатсем те памасть, 20 минута иртсен спартаковецсен алăкне Н. Сергунин мяча илемлĕн тапса кĕртет. Тата темиçе минута çеç иртет, «Красная звезда» командин нападенинче вылякансем тата 4 мяч кĕртеççĕ, çав вăхăтрах спартаковецсем пĕр хутчен кăна кĕртеççĕ.

Вăйă 6:4 шутпа «Красная звезда» команди çĕнтернипе пĕтрĕ.

Х. Л.

* * *

ХАРЬКОВ, июнĕн 16-мĕш. (ТАСС). Паян «Динамо» стадионĕнче футбол вăйăнче çĕршыври пĕрремĕш вырăна тухассишĕн ăмăртса, «Динамо» командипе (Киев) «Спартак» команди (Харьков) выляни.

Вăйăра «Спартак» команди 2:0 шутпа çĕнтернĕ.

* * *

ЛЕНИНГРАД, июнĕн 16-мĕш. (ТАСС). Ленин ячĕпе тăракан стадионра паян Ленинградри «Динамо» тата «Спартак» командисем выляни. Вăйăра «Динамо» команди 3:0 шутпа выляса илнĕ.

Хаçатра тухнă материалсем тăрăх

«Чăваш Коммуни» хаçатăн 135-мĕш номерĕнче Т. Майоровăн «Айăпа малтанхи руководительсем çине йăвантарма тăрăшаççĕ» ятлă статья пичетленсе тухнăччĕ.

ВЛКСМ Чăваш обкомĕ пĕлтернĕ тăрăх, статьяра илсе кăтартнă фактсем тĕрĕс пулнă. ВЛКСМ обкомĕ вăл статьяна ВЛКСМ Çĕрпӳ райкомĕнче сӳтсе-явса член укçине пухас çĕрти тата комсомол хуçалăхĕнчи ситменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнма хушнă.

Пионерсен республикăри лагерĕнче

Июнĕн 16-мĕшĕнче ВКП(б) Обкомĕн пĕрремĕш секретарĕ Чарыков, ЧАССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ Сомов, Çутăç Халăх Комиссарĕ Евлампьев юлташсем пионерсен республикăри лагерĕнче пулчĕç. Вĕсем лагерь ĕçĕпе паллаштарĕç. Ситменлĕхсене кăтартса пачĕç. Кунсăр пуçне ачасемпе тĕл пулса калаçса, вĕсене лайăх канса, сывлăхĕсене çирĕплетме сывлăх сунчĕç.

ИЛ. СОРОКИН.

Хутла вĕрентсе кăларчĕç

Шорчакасси (Шупашкар р.) ялсоветĕнче, ялти учительсем тăрăшнипе, хутла пĕлменнисене 29 çынна вĕрентсе кăларчĕç. Вĕсенчен Т. Моисеева, А. Родионова, А. Ермолаева, С. Михайлова тата Е. Семенова юлташсем отлично паллăсемпе вĕренсе тухрĕç.

А. МОИСЕЕВ.

ПУЛНИ-ИРТНИСЕМ

Шупашкарти милици уйрăмĕ Е. С. Ивановăна тата М. Н. Брадсовăна арестленĕ. Вĕсем нумай вăхăт хушшинçта та ĕçлемесĕр, çуса типĕтме çакнă кĕпе-йĕмсене вăрласа сутинипе пурăннă.

Юлашки вăхăтра вĕсем нумай çынсен япалисене çавăн пек вăрласа сутнă.

Ответлă редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

Программа радиопередач

Ст. РВ—74, в. 943 м., вр. местное. **22 июня**—20.15—Литературная передача. Сталин в творчестве чувашского народа. 21.00—концерт из произведений чувашского композитора Павлова в исполнении Ансамбля песни и пляски Чувашгосфилармонии п/у Казачкова.

Последние известия ежедневно, кроме воскресенья: 12.45, 19.00 и 19.45.

Чебоксарская акушерская школа

с отделением санитарных фельдшеров и медицинских лаборантов Наркомздрава Чувашской АССР на 1941—42 учебный год об'являет прием учащихся на 1 курс.

Школа готовит акушерок, лаборантов для лечебных учреждений и санитарных фельдшеров для Чувашской республики.

Срок обучения три года, на отделении лаборантов—два года.

В школу принимаются лица обоего пола в возрасте от 15 до 35 лет, имеющие общеобразовательную подготовку не менее семи классов средней школы.

Все поступающие подвергаются приемным испытаниям по математике (арифметике, алгебре, геометрии), физике, географии, русскому языку и политграмоте.

Прием заявлений производится с 10 июня по 25 августа 1941 года.

Приемные испытания с 10 по 25 августа.

Начало занятий с 1 сентября

БЕЗ ИСПЫТАНИЙ ПРИНИМАЮТСЯ: окончившие полную среднюю школу (десятилетку, рабфак, техникум) и отлично окончившие семилетку по основным предметам (кроме рисования, пения, черчения, физкультуры).

Заявления подаются на имя директора с приложением следующих документов (в подлинниках):

а) свидетельство об образовании,

б) свидетельство о рождении, выданное органами ЗАГС,

в) две фотокарточки с собственноручной подписью на них.

Кроме того, поступающие в возрасте от 16 лет и выше пред'являют лично свой паспорт.

Для ответа при подаче заявлений должны быть приложены почтовые марки на 60 коп.

Лица, допущенные к испытаниям, будут вызваны специальным извещением.

Принятые в школу по нуждаемости обеспечиваются общежитием и стипендией на общих основаниях.

АДРЕС: г. Чебоксары, улица Ленина, поселок Волгостроя, Санитарно-фельдшеро-акушерская школа.

3—1 ДИРЕКЦИЯ.

ЧУВАШСКИЙ ГОСУДАРСТВЕННЫЙ ПЕДАГОГИЧЕСКИЙ И УЧИТЕЛЬСКИЙ ИНСТИТУТ

ОБ'ЯВЛЯЕТ ПРИЕМ СТУДЕНТОВ НА 1941—42 УЧЕБНЫЙ ГОД.

Педагогический институт готовит преподавателей полной средней школы, учительский институт—преподавателей неполной средней школы по специальностям: история, чувашский и русский язык и литература, физика и математика и естествознание.

Срок обучения в пединституте 4 года, в учительском институте 2 года.

Прием заявлений с 20 июня по 1 августа. В заявлении должна быть УКАЗАНА ИЗБИРАЕМАЯ СПЕЦИАЛЬНОСТЬ И ПРИЛОЖЕНЫ: а) автобиография, б) документ об окончании средней школы (в подлиннике), в) три фотокарточки (снимок без головного убора размером 3×4 см.), г) справка об отношении к воинской обязанности (для военнообязанных), д) паспорт пред'является при личной явке.

Приемные экзамены с 1 по 20 августа по следующим предметам: 1) русский язык и литература (устно и письменно) для всех специальностей, 2) история народов СССР для поступающих на истфак и литфак, 3) география для поступающих на истфак, литфак и естфак учительского института, 4) чувашский язык и литература (устно и письменно) для поступающих на чувашское отделение литфака, 5) иностранный язык для поступающих на литфак пединститута, 6) математика (устно и письменно) для поступающих на физмат, 7) физика для поступающих на физмат и естфак пединститута, 8) химия для поступающих на естфак и физмат пединститута.

Отличники средней школы принимаются без приемных экзаменов. Отличники средней школы и выдержавшие приемные экзамены 2/3 на „отлично“, а остальные на „хорошо“, зачисляются с 1 сентября на госстипендию.

Принятые в институт обеспечиваются общежитием.

ЗАЯВЛЕНИЯ НАПРАВЛЯТЬ: гор. Чебоксары, ул. Карла Маркса, дом № 84, Чувашпединститут, приемная комиссия.

3—2 ДИРЕКЦИЯ ЧУВАШПЕДИНСТИТУТА.

Мариинско-Посадский техникум землеустройства и мелиорации НКЗ РСФСР

об'являет прием студентов на первые курсы землеустроительного и гидротехнического отделений.

ГИДРОТЕХНИЧЕСКОЕ ОТДЕЛЕНИЕ готовит гидротехников со средним образованием, хорошо обладающих знанием производства работ по изысканиям, проектированию и строительству гидротехнических сооружений (плотины, водосливы, водоспуски, трубчатые и шахтные колодцы); осушению заболоченных земель, орошению земель и искусственному дождеванию; мелкому и глубокому бурению, а также по строительству водопроводов и гидроэлектростанций малой мощности для колхозов, совхозов и МТС.

ЗЕМЛЕУСТРОИТЕЛЬНОЕ ОТДЕЛЕНИЕ готовит техников землеустроителей, хорошо знающих геодезическую технику по угломерной и вертикальной с'емке (теодолитная, мензульная и производство нивелировки) для составления с.-х. карты, проектирования дорожной трассы, для проектирования к строительства промышленных и жилых сооружений; отвод, планировку хозяйственных центров МТС, совхозов и колхозов.

Срок обучения 3 года.

Желающие поступить в техникум в возрасте от 15 до 35 лет, имеющие образование не ниже неполной средней школы, должны подавать заявления по адресу: город Мариинский-Посад, ЧАССР, ул. Ленина, № 3, техникум землеустройства и мелиорации, в приемную комиссию, не позднее 15 августа с. г. с документами: 1) об образовании. 2) о рождении, 3) о здоровье, 4) автобиографию, 5) две фотографические карточки.

С 15 по 28 августа будут приемные испытания по предметам: 1) математика, 2) русский язык и литература, 3) физика, 4) Конституция СССР, в об'еме программы неполной средней школы.

Окончившие в 1941 году неполную среднюю школу по вышеуказанным предметам с отметками „отлично“ принимаются в техникум без испытаний. Окончившие 8 и 9 классы принимаются на 1 курс техникума без испытаний.

Все принятые будут обеспечены общежитием и постельными принадлежностями. Принятые как отличники учебы, а также выдержавшие приемные испытания по всем четырем предметам с отметками „отлично“, будут обеспечены государственной стипендией.

Начало учебных занятий с 1 сентября 1941 года.

3—1 ДИРЕКЦИЯ.

Румынири легионерсен пăлхавне хутшăннă çынсем пирки йышăннă приговорсем

БУХАРЕСТ, июнĕн 17-мĕш. (ТАСС). Июнĕн 10-мĕшĕнче çар трибуналĕ январĕн 21—23-мĕшĕнче пулса иртнĕ легионерла пăлхава хутшăннă çынсене айăплас тĕлĕшпе пуçланă ĕçе пăхса тухнă. Трибунал 132 çын пирки приговорсем йышăннă, вăл шутран 14 çынна 5—25 çул хушши каторгăра ӳсрамалла, 118 çынна пĕр çултан пуçласа 6 çула çити тĕрмере хупса ӳсрамалла тунă.

БЕРЛИН, июнĕн 16-мĕш. (ТАСС). Трансоцеан агентстви çапла пĕлтерет: Румынири суд Румынири легионерла движенин руководительне, премьер-министр заместителĕ пулнă Хорна Симана ĕмĕрлĕхех каторгăна ямалла тунă. Çак приговора заочно йышăннă. Легионерла движенин ытти 10 руководителĕ пирки те çакăн пекех хаяр приговор йышăннă.

Ютçĕршывсен США-ри фончĕсем çине секвестр хунă

НЬЮ-ЙОРК, июнĕн 16-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентствин Вашингтонри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Рузвельт Германипе Италин США-ри фончĕсем çине секвестр хунă.

Çакăнпа пĕр вăхăтрах Шурă Çурт континентри Европăри мĕнпур çĕршывсен фончĕсем çине секвестр хуни çинчен пĕлтернĕ. Çакăнпа пĕрлех çапла пĕлтернĕ: Швеци, Финлянди, Испани, Португали тата СССР фончĕсем çинчен çак секвестра пĕтĕмĕшле лицензисем урлă илме пултараççĕ, анчах та вĕсен: пĕтĕмĕшле лицензисемпе «çак законран пăрăнса иртес шутпа» усă курмастăр, тесе шантармалла.

Пулă ĕрчетеççĕ

ЕТЕРНЕ. Чурпайри Киров ячĕпе тăракан колхоз кăçал çуркунне пĕр пысăк пĕве турĕ. Колхоз вăл пĕвере пулă ĕрчетет. Нумай пулмасть колхоз пĕвене 12 килограмм карас пулă янă. Пĕвене татах пысăклатма палăртнă.

М. ДАНГЕР.

СУД

Ача-пăча аташăвĕ мар

Айăпланакансен тенкелĕ çинче икĕ çамрăк ларараççĕ. Вунтăхăр çула çитнĕ Анатолий Яснопольский тата çирĕм çула çитнĕ Владимир Кузьмин. Иккĕшĕ те паян-ыран вăтам шкултан—Çĕрпӳри фельдшерсен шкулĕнчен вĕренсе тухса, диплом илсе тухмалла пулнă. Вунă çул хушшинче шкулта вĕрентсе, çĕршыва валли усăллă çынсем тăвас тесе, государство укçи-тенкине вĕсемшĕн сахал мар расходланă.

Акă вĕсем айăпланакансен тенкелĕ çинче ларараççĕ. Вĕсен адресĕпе калакан «преступник» сăмаха час-часах илтетĕн суд пыракан залра. Мĕншĕнха çак сăмаха илтме тивĕçлĕ пулнă Яснопольскипе Кузьмин? Мĕнле сăлтавсем илсе пынă вĕсене совет законĕсене пăсас çул çине? Фельдшерсен шкулĕнче коммунистла воспитани ĕçĕ кирлĕ вырăнта тăнă пулсан, партипе комсомолăн пуçламăш организацийĕсем, профком тата преподавательсен коллективĕ студентсем хушшинче тивĕçлипе ĕçленĕ пулсан çапла пулас çукаххĕ.

Студентсем хушшинче çирĕп юлташлăх пулман. Хăш-пĕрисем коллективран уйăрăлса кайса, хăйсене мĕн аса килнĕ çавна туса çӳренĕ. Çакна айăпланакансем хăйсем те тата свидетельсем те нумай фактсемпе çирĕплетсе пачĕç. Анатолий Яснопольский тăванĕсемпе пĕрле хăйсен килĕнче пурăннă. Анчах вăл картла выляма студентсем патне, общежитине çӳренĕ.

— Мĕншĕн эсир ытти вăйăсене мар, картла выляна?

— Общежитинче шашка, шахмат тата ытти вăйăсем пулман. Пушă вăхăта эпир пуринчен ытла картла выляса ирттеннĕ,—ответлет Яснопольский.

Судра пăхса тухма тăратнă ĕçре 1940 çулти декабрĕн 11-мĕшĕнче пулса иртнĕ факт тĕп вырăнта тăрать. Шăп çав кунтинех шкулти комсомол организацинче Яснопольский дисциплинăна пăсни çинчен сӳтсе-явмалла пулнă. Яснопольский шкаф ӳсса деласем илет те, Кузьмина парать. Унтан хăех илет те, кăмакана чиксе спичкăпа чĕртсе ярать. Кузьмин ăна çак преступленилле ĕçе тума пулăшать. Çапла тытăнаççĕ вĕсем комсомол комитечĕпе профкомăн ĕç хучĕсене çунтарса яма.

Яснопольскин çитменлĕхĕсене, вăл уйăрăм студентсенчен măшкăлланине тата хулиганла ĕçсем тунине кăтартса пачĕç уйăрăм свидетель-студентсем. Свидетель шучĕпе чĕннĕ Молниева (комсомол комитечĕн секретарĕ), Сайгушкин (районри сывлăха сыхлав пайĕн заведующийĕ), студент Числов тата ытти сем те Яснопольскипе Кузьминăн çитменлĕхĕсем çинчен каларĕç.

— Яснопольскин дисциплина çукки-не тахçанах пĕлнĕ те. Анчах та эпĕ çак факта ача-пăча аташăвĕ, тесе кăна шутланă,—ответлет свидетель Сайгушкин.

Комсомол комитечĕн секретарĕ Молниева, студент Числов тата ытти свидетельсем те Яснопольскин малтанхи çитменлĕхĕсене кăтартса пачĕç. Мĕншĕн-ха вĕсем «пĕчĕк» çитменлĕхсене çийĕнчех тăрă шыв çине кăларса, вăхăтра тӳрлетмĕ пулăшман? Шкул дирекцийĕ (директор Григорьев), партипе комсомол тата профсоюз организацийĕсем студентсем хушшинче политикăллă воспитани ĕçне туса пыман. Кашни студент вĕренӳре тата шкул тулашĕнче хăйне мĕнле тытканине пĕлмен.

Комсомол райкомĕ те фельдшерсен шкулĕнче вĕренӳпе воспитани ĕçĕ мĕнле пынине интереслемнен. Ахальтен мар ĕнтĕ Яснопольскине комсомол пуçламăш организацинче комсомолтан кăларма йышăннă тата ун пирки следстви пуçарнă хыççăн комсомол райкомĕ ăна лайăх характеристика парать.

— Çак суд ĕçĕ,—терĕ государство енĕпе айăплаканĕ прокурор Пидуганов,—фельдшерсен шкулĕнчи преподавательсемшĕн, унти тĕрлĕ обществăллă организацисемшĕн, ытти шкулсенчи руководительсемшĕн тата шкулсенче вĕренекенсен тăванĕсемшĕн çирĕп урок пулса тăмалла.

Адвокат Алексеев та çакна çирĕплетсе каларĕ.

Суд пĕр талăк ытла пычĕ. Свидетельсем шулма 19 çынна чĕннĕ. Суд председателĕ халăх судьи Ануфриев, членĕсем Плотниковпа Софонов, адвокатсем Семеновпа Алексеев пулчĕç. Государство енчен айăплаканĕ—прокурор Пидуганов пулчĕ.

Июнĕн 12-мĕшĕнче суд А. Яснопольскипе В. Кузьмина Уголовнăй Кодексăн 78-мĕш статьин иккĕмĕш пайĕпе айăпласа, икшер çуллăха тĕрмене хупса лартмалла приговор йышăнчĕ.

Т. МАЙОРОВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, экономика пайĕн — 0—88, сырусемпе рабселькорсен пайĕн — 2—30, «Ĕçхĕрарăмĕ» тата «Хатĕр пул» журналсен — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин—0—23.

НТ 3129

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР, Заказ № 293. Ф. б. 58 84 п. л.